4392 26-91

Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

С. ПЕТРОВ

# ПĔТĔМ СОЙУСРИ КОМУНИССЕН (п.) ПАРТТИЙĔН 15-мĕш КОНФЕРЕНТСИ ĔҪĔСЕМ

Шупашкар хулинђи партти орканисатсин пуххинђе тунă токлат

ЂĂВАШ ОПКОМĔН ОРКПАЙĔ
Шупашкар — 1926

Пӗтӗм тӗнђери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

С. ПЕТРОВ

# ПӖТӖМ СОЙУСРИ КОМУНИССЕН (п.) ПАРТТИЙӖН 15-МӖШ КОНФЕРЕНТСИ ӖҪӖСЕМ

Шупашкар хулинђи партти орканисатсин пуххинђе тунӑ токлат

4392

ЂӐВАШ ОПКОМӖН ОРКПАЙӖ
Шупашкар — 1926

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Б. Советская, 6

Чувашгиз № 1105 Напечат. 2000 экз.

Йулташсем! Парттин 15-мĕш Конферентсийĕ тунă ĕçсем çинђен, нимĕн те сиктерсе хăвармасăр, тĕпĕйĕрĕпе темĕнђул тăрăшсан та пĕр токлатрах каласа пама хал çук, мĕншĕн тесен Конферентсире питĕ пысăк ыйтусем сӳтсе йаврĕç. Епĕ хамăн токлатра Конферентси тунă ђи тĕп ĕçсем çинђен каласшăн. Токлата епĕ виçĕ пайа уйăратăп: 1) кăпиталисăм çирĕпленнипе комуниссен парттийĕсен сатађĕсем; 2) пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тăвасси, тата 3) парттин шалти ĕçĕсемпе çывăхри сатађĕсем. Çак виçĕ ыйту çинђен епĕ кĕскен каласа пама тăрăшăп,—анђах малтан, пирĕн парттин 15-мĕш Конферентсийĕ партти историнђе мĕнле вырăн йышăнса тăни çинђен калас пулать.

## 15-мĕш Конферентси партти историнђе мĕнле вырăн йышăнса тăрать.

Пĕрпĕр ĕçе мĕнле туса ирттернине, ĕçри ăнăçусене хисепе илнĕ ђух епĕр йаланах,—партти сйесĕсемпе конферентсийĕсем историре йĕр туса хăвараççĕ, тетпĕр. Сйессемпе Конферентсисем партти историнђе йаланах питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. 15-мĕш конферентси: сотсиалисăм тăвас ĕçре ку таранђђен ĕçленине, парттин шалти ĕçĕсене, пĕтĕм тĕнђери политтĕк ĕçĕсене хисепе илсе—сотсиалисăм тăвас ĕçри малашнехи çула татăклă, уçăмлă кăтартса хăварђĕ. Çавăнпа 15-мĕш Конферентси

ытти партти сиесёсемпе конферентсисенђен уйрăмах паллă вырăнта тăрať. Парттири оппоçитси пулнине епĕр пурте аван пĕлсе тăратпăр. Парттири çĕнĕ оппоçитси, парттири пĕтĕм партти политтĕкĕнђен урăх йеннелле сулăнакансене, ушкăнсене, пĕтĕм оппоçитсисене — 1920-мĕш çулхи Шљапниккăвпа Метветĕв оппоçитсинђен пуçласа Тротски оппоçитсине çитиђђен пĕр çĕре пĕтĕçтернине, епĕр пурте пĕлсе тăратпăр. Парттири çĕнĕ оппоçитси пĕтĕм партти политтĕкĕнђен урăх йенелле сулăнакансене, ушкăнсене пĕтĕçтерсе, вăрттăн орканисатси, комиттетсем тунă, хаçатсем кăларнă,—куçа кĕретĕнех пирĕн парттипе вăйлă кĕрешме тытăннă. Оппоçитсисен çĕнĕ пĕрлешӳвĕ парттипе çакăн пек киресĕр майсемпе кĕрешнĕ хыççăн, партти 15-мĕш Конферентси умĕн оппоçитсийе çĕнтерђĕ, оппоçитсийе парăнтарђĕ. Оппоçитсийе çĕнтерсен Ленин линийĕ савăнђĕ. Ленин линине хытă алпа, пĕр пăрăнмасăр пурнăçа кĕртекен Тĕп Комиттет та тепĕр хут савăнђĕ. (*Алă çупаççĕ*).

Оппоçитси ĕретне пит паллă ĕçлекенсем, тата çитменнине Комунисла Инттернатсионала йертсе пыракан (Çиновйĕв) кĕнĕ пулин те, 15-мĕш Конферентси пухăннă çĕре оппоçитсийе салатса пăрахнă, Октăпĕр кунĕсем пирĕн ума кăларнă сатађсене пурнăçа кĕртес йађĕпе, Конферентси кун йĕркинђи ыйтусене пĕр çын пек пулса татса пађĕ.

Çак каланисем пирĕн парттишĕн, тата пĕтĕм тĕнђери комуниссен парттисемшĕн питĕ пысăк

вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Конферентси оппоҫитсийе пӗр саспах сивлерӗ, пӗр саспах Тӗп Комиттет линийӗ тӗрӗс, терӗ,—ку таранђђен пынӑ ҫула тепӗр хут тӗрӗслесе, малашнехи сатађсене кӑтартса хӑварђӗ. Епӗ малтанах, Конферентси кӑтартнӑ виҫӗ пысӑк сатађсем ҫинђен калатӑп, терӗм.

## Кӑпиталисӑм ҫирӗпленнипе Комуниссен парттийӗсен сатађӗсем.

### Ҫак ыйтӑва мӗншӗн Конферентсире лартмалла пулђӗ?

Конферентси умӗн кашни хаҫат страницсинђех, кашни кунах кӑпиталисӑм ҫирӗпленни ҫинђен сӳтсе йавни курӑнађђӗ. Ҫапах та Конферентси куи йӗркине ҫак ыйтӑва лартмалла пулђех. Мӗншӗнха лартмалла пулђӗ ӑна? Мӗншӗн тесен пирӗн парттире кӑпиталисӑм ҫирӗпленни ҫинђен икӗ тӗрлӗ шухӑшлакансем пулђӗҫ: пӗрремӗшӗ—оппоҫитси шухӑшӗ; оппоҫитси шухӑшӗпе кӑпиталисӑм пӗртте ҫирӗпленмест, ҫирӗпленме мар, ишӗлсех пырать, т. ыт. те; тепри—пирӗн партти шухӑшӗ Пирӗн партти акӑ мӗнле пӑхать ҫак ыйту ҫине: епӗр хаљ кӑпиталисӑм вӑхӑтлӑха ҫирӗпленнӗ вӑхӑтра пурнӑтпӑр. Комунисла Инттернатсионал Ӗҫтӑвкомӗн 6-мӗш пленӑмӗ:—„Кӑпиталисӑм вӑхӑтлӑха ђӑнахах ҫирӗпленет; ӑна кӑпиталисӑм ӗмӗрлӗхе ҫирӗпленнӗ пек ӑнланмалла мар,—кӑпитталисӑм вӑхӑтлӑха ҫирӗплении—кӑпиталисӑм ҫӗкленсе пыракан ҫӗнӗ самана

мар, вăрçă иртнĕ хыççăнхи çулсемпе танаштарсан, кăпиталисăм халђ вăхăтлăха çирĕпленни палăрат̆. Кăпиталисăм ђăнахах вăхăтлăха çех çирĕпленни халĕ пушшех таса аван курăнат̆" тенĕ. Кăпиталисăма çак каланă пек пахалани халĕ те тĕрĕс. Çапла ĕнтĕ пăхат̆ пирĕн партти ку ыйту çине.

Комунисла Инттернатсионал Ĕçтăвкомĕн пленăмĕ кăпиталисăм çинђен çакăн пек пахаласа хăварнă, 15-мĕш Конферентси те кăпиталисăма çакăн пекех пахаласа хăварђĕ. Анђах кунпах çитместха. Кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленнине пирĕн ђыхвăрсемпе, çактăсемпе кăтартас пулат̆. Çак ыйтăва тĕрĕс ăнланнинђен пирĕн партти сотсиалисăм тăвас ĕçре, Комунисла Инттернатсионал пĕтĕм тĕнђери комуниссен парттийĕсене йертсе пырас ĕçре мĕнле политтĕк тытасси килет.

## Кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленни мĕнрен курăнат̆?

Кирек хăш патшалăх вăйхăвађĕ те, унăн шултра промышлĕннăçĕ, пуринђен ытла тимĕр-тăмăр тавраш̆ĕ: ђукун, хурăç, çĕркăмрăк ĕçлекен промышлĕннăçĕ вăйлинђен килет. Мĕншĕн тесен хуçайствă тĕрекĕ çак виçĕ пайран: ђукун, хурăç, çĕркăмрăк промышлĕннăçĕ вăйлинђен килет. Ĕç хатĕрĕсемпе вăрçă хăтĕрĕсем тăвасси те тимĕр тавраш̆ĕ тăвакан промышлĕннăç вăйлинђенех килет.

1914-мĕш çулта тапраннă вăрçăпа Кермани промышлĕннăçне астуса илерха. Керманнийе пĕтĕм Йевроппăри патшалăхсем: Раççей, Анкли, Франтси,

тата ытти патшалăхсем те тапăннăђђĕ. Апла пулнă пулин те Кермани—унăн шултра промышлĕннăçĕ пулнипе, тимĕр тавращĕпе çĕркăмрăк промышлĕннăçĕ çителĕклех аван пулнипе, тата промышлĕннăнăçа пĕр алла, патшалăх аллине (госкапитализм) пĕрлештернипе—тапăнакансене нумайђђен парăнмасар тăђĕ. Çакă ĕнтĕ шултра промышлĕннăç, пуринђен ытла тимĕр тавращĕпе çĕркăмрăк промышлĕннăçĕ хуçайствă тĕрекĕ йенђен пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартаť. Епĕ тимĕр тавращĕ ĕçлекен промышлĕннăç мĕнле тĕрекленсе пынине кăтартакан фактăсем илсе кăтартăп. Ак ђукунах илер. 1922-мĕш çулта, 1913-мĕш çулхипе танаштарсан пĕтĕм тĕнђипе 73,6 прођђăн ђукун шăратнă, 1926-мĕш çулта ĕнтĕ 97 прођђăна çитет. Хурăç: хурăç 1922-мĕш çулта, 1913-çулхипе танаштарсан пĕтĕм тĕнђипе 90,5 прођђăн шăратнă. 1926-мĕш çулта вăрçă умĕнхинђен иртсе—118 прођђăна çитет. Çĕркăмрăк: çĕркăмрăк 1922-мĕш çулта 96,8 прођђăн кăларнă, 1926-мĕш çулта кăларни 97,6 прођђăна çитет. Çаксене пурне пĕрле илсессĕн, хуçайства тытăнтарса тăракан 3 пайĕ те—кăпиталисăмла патшалăхсен хуçайствин хăшпĕр пайĕсем вăрçă умĕнхи карта çывхарнине, хăшпĕр пайĕсем вăрçă умĕнхи картран та иртсе кайнине кăтартаççĕ. Йалхуçайстви: йалхуçайстви те 1913-мĕш çултипе танаштарсан ўсни курăнаť. Йалхуçайстви йенђен те кăпиталисăмла патшалăхсем вăрçă умĕнхи карта çывхараççĕ теме йураť. Кăпиталисăм çирĕпленнине тата,

тепӗр йенђен, вӗсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнђе йӗркерен тухнӑ хуҫайстви йусанни кӑтартаҭ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнђе пур патшалӑхсем те пӗрпӗринђен уйӑрӑлса тӑнӑ, кашни патшалӑхах тепӗр патшалӑхран кӳнӗ ђӗрӗ тавар йе ытти таварсем кирлӗ пулин те, пӗрпӗринпе сутуилӳ туман, темӗн ђул кирлӗ пулин те пӗрпӗринпе хутшӑнман. Ҫапла вара, кӑпиталисӑм хирӗҫлӗхӗсене пула пӗтӗм тӗнђери хуҫайствӑ йӗркерен тухса карӗ, пуршуаҫи нумайђђен хуҫайства йӗркене кӗртеймесӗр тапаланђӗ. Вӑрҫӑ ђарӑнсан тин, 1926-мӗш ҫул ҫитнӗ ҫӗре уйрӑм патшалӑхсем пӗрпӗринпе ҫыхӑнма пуҫларӗҫ,—ку ӗнтӗ мӗнле пулсан та кӑпиталисӑм ҫирӗпленнинех кӑтартаҭ, ӑна сирсе пӑрахма ҫук. Унтан тата тӗнђери патшалӑхсем пӗрпӗринпе мӗн ђухлӗ сутуилӳ тунине илсе пӑхар. 1923—24-мӗш ҫулта 32 патшалӑх пӗрпӗринпе 29 мӗлйарт толлӑрлӑх*), 1925—26-мӗш ҫулта 32,9 мӗлйарт толлӑрлӑх сутуилӳ тунӑ. 1913-мӗш султа вара 35,4 мӗлйарт толлӑрлӑх сутуилӳ тунӑ пулнӑ. Ҫапла ӗнтӗ пӗтӗм тӗнђери хуҫайствӑ ҫыхӑнса ӗҫленине патшалӑхсем пӗрпӗринпе сутуилӳ туни те кӑтартаҭ, патшалӑхсем пӗрпӗринпе сутуилӳ туни 3 мӗлйартлӑх анђах вӑрҫӑ умӗнхи карта ҫитеймен. Ҫакӑ та кӑпиталисӑм ҫирӗпленнине, вӗсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнђе йӗркерен тухнӑ хуҫайствӑ йӗркене кӗнине кӑтартаҭ.

Капиталисӑм ҫирӗпленнине вӗсен укҫи-тенки те кӑтартаҭ. Пӗтӗм тӗнђери вӑрҫӑ хыҫҫӑн пирӗн Со-

*) Толлӑр—тенкӗпе шутласан 1 тӗнкӗ те 94 пус пулаҭ.

вет Сойусĕн укçи-тенки хакĕ анђах мар ўкнĕђђĕ епĕр анђах мар мĕлйартсемпе шутлаттăмăр, пур патшалăхсен укçи-тенки хакĕ те ўкнĕђђĕ: Кермани маркки, Франтси франкĕ айалалла вĕçеђђĕç, т. ыт. те. 1926-мĕш çулта ĕнтĕ 40 патшалăхра укçатенкĕ хакĕ хăпарни курăнаť. Çапла ĕнтĕ пуршуаçи çак йенђен те хăйĕн поçитсине çирĕплетет.

**Кăпиталисăм пур çĕрте те пĕр пек сирĕпленмест.**

Ку таранђђен каланисем пурте кăпиталисăм çирĕпленнине кăтартакан паллăсем. Анђах епĕр унпах ђарăнма пултараймастпăр. Пирĕн кăпиталисăм ăçта, тата мĕнле çирĕпленнине те тĕплĕ пăхса тухмалла. Мĕнле пыраť вăл кăпиталисăм çирĕпленни? Тўрĕ çулпаи, кукăрмакăр çулпаи? Шалти хирĕçўсемсéри, йе кăпиталисăм çирĕпленет пулсассăн та хирĕçўсем пури? Хăш патшалăхсен хуçайстви çўлелле çĕкленсе пынипе хăш патшалăхсен хуçайстви айалаллах анса пыни мĕне пĕлтереççĕ.

Кăпиталисăм çирĕпленет пулсассăн та кăпиталисăм хирĕçĕвĕсем пĕтмеççĕ, пĕтме те пултараймаççĕ, çавăнпа та кăпиталисăм çирĕпленни пур çĕрте те пĕр пек пулса пымасť. Кăпиталисăм çирĕпленни кашни патшалăхрах урăхла çулпа пынине акă çак ултă паллăсем кăтартаççĕ.

Илер **Амерĕке**.—Амерĕкре кăпиталисăм çирĕпленни Йевроппăринђен хăвăртрах та, çирĕпрех те пыраť. Амерĕкре електритсă вăйĕпе усă курни

мĕнле ўссе пынине илер. 1914-мĕш çулта Америкре електритсӑ вăйĕпе 3,8 мĕлйарт лаша вăйĕ ђухлĕ усӑ курнӑ, 1920-мĕш çулта 13,3 мĕлйарт лаша вăйĕ ђухлĕ. Ку Америкре кăпиталисăм нумай çитĕннине кăтартать. Тепĕр йенђен тата пĕтĕм тĕнђери ылтăн саппасĕнђен çурри Америк иллинђе.

Халĕ ĕнтĕ **Анклийе** илсе пăхар. Америкре кăпиталисăм питĕ ўсни курăнать, Анклире апла мар. Анкли кăпиталисăмĕ вăрçăђђенхипе танаштарсан кайалла ђакни курăнать. Анклире çĕркăмрăк пирки хирĕçў пырать, ытти йенђен те хуçайствă ўсме ђаранни палăрать, пуринђен ытла унта классен хирĕçĕвĕ, кăпиталиссемпе ĕçхалăхĕ хушшинђи хирĕçў вăйланса пыни паллă вырăн йышăнса тăрать. Çак хирĕçўсем пирки Анклири мĕн пур пек вăй пайăн пайăн уйăрăлнине куратпăр—тепĕр тĕрлĕ каласан: рапођђи класра сулахай йенне сулăннине, револђутси йенне сулăнакан вăйсем пухăннине куратпăр. Çапла ĕнтĕ Анклире епĕр Америкри пек хуçайствă малалла ўссе пынине мар, вăрçă умĕнхипе танаштарсан кайалла кайнине куратпăр.

**Виççĕмĕшĕ** вăл—Хĕвелтухăçĕнђи колоњисенђи халăх револђутси йенне сулăнни. Хĕвелтухăçĕнђи колоњисем револђутси йенне сулăнни кăпиталисăм çирĕпленни мар ĕнтĕ вăл—вăл рапођђи класпа колоњисем хăйсен револђутсиллĕ ĕçне çирĕплетни пулать. Хĕвелтухăçĕнђи колоњисем револђутси йенне сулăнни кăпиталисăмшăн хăрушă йапала, вăл кăпиталисăм çирĕпленнине тăнђах пĕтерсе хума

пултарат. Çапла вара, пěр йенђен, кăпиталисăмла патшалăхсем мĕнле те пулсан çирĕпленсе пыраççĕ пулсан, тепĕр йенђен револђутсиллĕ вăйсем те çирĕпленсе, ўссе пынине куратпăр.

**Тăваттăмăшĕ** — Палкканри патшалăхсен: Ђеххин, Йуко-Славин, тата Палтти тинĕсĕ таврари патшалăхсен ĕçĕсем мĕнле пыни. Ку патшалăхсенђе çирĕпленў веçех кайалла, кутăнла пырат, ку патшалăхсем хăйсен вăйĕпе промышлĕннăçа уралантарма пултараймаççĕ, çавăнпа вĕсем ытти вăйлăрах хуçайствăллă патшалăхсен аллине кĕрсе ўкнĕ. Çак патшалăхсенђе промышлĕннăç ўсме, йусанма мар, кайаллах кайса пырат; çавăн пирки унта кăпиталисăм çирĕпленни те çук.

**Пиллĕкĕмĕш** — Йевроппăра, Франтсире, Керманире кăпиталисăм çирĕпленни. Çак уђаскăра кăпиталисăм вăйлах çирĕпленни курăнат. Кермани, ăна Тауес планĕпе «çамрăклатнă» хыççăн криçĕсран, (хуçайствă авăрăнса кайнă саманран) тухса, хăйĕн промышлĕннăçĕн пур пайĕсене те трессем аллине хăвăрт пĕтĕçтерме тапратрĕ.

Çĕркăмрăк промышлĕннăçĕ ĕнтĕ Керманире 97 прођђăнĕ трессенђе пĕтĕçсе тăрат, 3 прођђăнĕ анђах пĕтĕçмен. Тимĕр тавраш ĕçлекен промышлĕннăç, çĕркăмрăк промышлĕннăçĕн виçĕ пайĕнђен икĕ пайне пĕрлештерсе тăрат. Тимĕрпе çĕркăмрăк промышлĕннăçне пĕрлештерсе, пĕр вăйлă хуçайствă тунă хыççăн, Кермани промышлĕннăçĕн ытти пайĕсене те пĕрлештерме тăрăшат. Малалла тата химипе

електритсӑ промышлӗннӑҫӗсене пӗр треса пӗрлештернӗ,—вӗсен аллинҫе хӑмӑр ҫӗркӑмрӑк промышлӗннӑҫӗн виҫӗ пайӗнҫен икӗ пайӗ.

Електритсӑ промышлӗннӑҫӗпе хӑмӑр ҫӗркӑмрӑк промышлӗннӑҫне пӗрлештерни Кермани промышлӗннӑҫне йӗркелетес йенҫен паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрат; мӗншӗн тесен ҫӗркӑмрӑк, електритсӑ, тата хими промышлӗннӑҫӗсене пӗрлештерсен питӗ вӑйлӑ хуҫайствӑ пулса тӑрат. Кермани ҫакӑн йенҫен тата малалла кайма та пултарат.

Ҫӗркӑмрӑк кӑларас ӗҫе хӑш вырӑнта питӗ йӗркелетнӗ, електритсӑ вӑйӗпе ӗҫлеҫҫӗ. Тата Керманире хими промышлӗннӑҫне ҫӗнӗрен йусас, малалла йарас йенҫен пысӑк ҫитӗнӳсем пур. Ӗҫ ӳсӗмӗ хӑшӗпӗр претприйаттисенҫе, рапоҫҫисен шутне ӗҫ ернине ҫакарнӑ пулин те, 200 проҫ. ҫитет. Керманире майсӑр пысӑк трессем пур, вӗсем хӑйсен вӑйӗпе тӗлӗнтерсех йараҫҫӗ. Акӑ пӗрлештернӗ хурӑҫ тресне илер: унӑн малтанхи аксийӗсем 800 мӗлйун маркка ҫитеҫҫӗ. Кермани хӑйӗн промышлӗннӑҫне трессене пӗрлештерни Кермани ҫиккинҫен те тухасшӑн,—пӗтӗм Йевроппӑри патшалӑхсен хурӑҫ промышлӗннӑҫне пӗрлештересси ҫинҫен калаҫу пырат. Ҫав хурӑҫ промышлӗннӑҫӗсен пӗрлешӳне Керманийе, Франтсийе, Пелкийе, тата ытти патшалӑхсене те кӗртесшӗн. Йевроппӑри патшалӑхсен хурӑҫ промышлӗннӑҫӗсене пӗрлештерсен, тӗлӗнмелле вӑйлӑ орканисатси пулат вӑл. Унтан татах та пӗтӗм тӗнҫери пӗрлешӳсем шӑтса тухаҫҫӗ: релссӑ

тăвакан пĕрлешӳ, пăхăр ҫинтиккаҔĕ, калилнăй лампа тăвакан промышлĕннăҫ пĕрлешĕвĕ. Пĕтĕм Йевроппипех пĕр електритсă тресĕ тума та хатĕрленеҫҫĕ. Ҫак паллăсем кăпиталисăм Йевроппăра, Керманипе Франтсире, ҫирĕпленнине кăтартаҫҫĕ.

Кăпиталиссем пĕтĕм тĕнҔери промышлĕннăҫа тĕрлĕрен пĕрлешӳсене пĕрлештерес йенне сулăннă майпа тата тепĕр ыйту тухса тăрат—вăл «Пан Йевроппă» ҫинҔен. Ун ҫинҔен епĕ конферентсиҔҔенех, пĕтĕм тĕнҔери политтĕк ĕҫĕсем ҫинҔен токлат тунă Ҕух каланăҔҔĕ. Тĕрлĕрен трессене, ҫинтиккатсене пĕрлештерсен хуҫайствă ĕҫĕ ăнăҫнине кура, пуршуаҫипе сотсиал-темократсем пĕрле— Йевроппăра пуршуаҫиллĕ пĕрлешӳллĕ штат · тăвасси ҫинҔен йанраҫҫĕ. Икĕ сăлтав пуршуаҫийе Йевроппăра пĕрлешӳллĕ штат тăвас шухăш йенне сулăнтарат: пĕри—Амерĕк тавлашăвĕ, тепри—Совет Сойусĕ, сотсиалисăмлă революутси пĕтĕм Йевроппипех сарăлассинҔен хăрани. Сотсиал-темократсем савăннă вара ҫак лосăнкшăн: халĕ ĕнтĕ кăпиталисăм ҫирĕпленнĕ вăхăтра, уйрăм кăпиталиссем хушшинҔи хирĕҫӳ йăвашланнă вăхăтра, пĕтĕм тĕнҔипе хуҫайствăллă пĕрлешӳсем тунă вăхăтра, политтĕк йенҔен пĕрлешесси, Йăвроппăра пĕрлешӳллĕ штат тăвасси ҫинҔен те ыйту лартма йурат, теҫҫĕ вĕсем. Кăпиталиссене пĕрлештерес ĕҫе Ликă Натсин тумалла; Ликă Натси пĕтĕм Йевроппăри кăпиталиссене пĕр ҫемйене пĕрлештермелле, теҫҫĕ. Капла хăтланнинҔен нимĕн тулкки те пулас ҫуккине епĕр таса

пӗлсе тăратпăр. Йевроппăри кăпиталиссем нимӗнле пӗрлешӳ те тума пултараймаççӗ, кăпиталиссем хушшинђи хирӗçӳсем пӗтмеççӗ, вӗсене пӗтерме те май çук,—мӗншӗн тесен кăпиталиссем хушшинђи хирӗçӳсем кашни кăпиталис хăй ытларах услам илесшӗн çуннинђен тухса пыраççӗ. Манăн ун çинђен тӗпӗ-йӗрӗпех каласа тăма вăхăт çук. Кӗскен калатăп: пуршуаçипе сотсиал-темократсем темӗнђул тапалансассăн та вӗсем пӗрлешсе, пӗрпӗринпе килӗштерсе пурăнма пултараймаççӗ. Сотсиал-темократсем тепӗр хут рапођђи класа улталаса, рапођђи класа пуршуаçипе çапăçассинђен урăх йеннелле сулăнтарасшăн,—мӗн пур ӗçӗ те çавă пулаť. Ăна пирӗн хисепе илес пулаť, хисепе илсе мӗн тумаллине шутласа хумалла.. Пуршуаçи хушшинђе тепӗр йеннелле сулăнакан промышлӗннăçа пӗрлештерме хăтланнине хирӗç пыракан ушкăн та пур. Çак ушкăнсен шухăшӗпе вăйлă хуçайствăллă, шултра промышлӗннăçлă, çинтиккатлă, треслă, кăпиталисла патшалăхсен вăрçăсăрах ытти вăйсăр патшалăхсене парăнтарса, колоњисем ырăнне тумалла. Çакăн пирки нумай пулмасť панккирсем манифес кăларнăђђӗ, вăл лосăнк çинђен хаљ те нумай калаçаççӗ.

### Кăпиталисăм çирӗпленни вăхăтлăха çех.

Епӗ ку таранђђен каланине пурне те пӗр çӗре пӗтӗçтерсен пуршуаçи шутсăр вăйланса кайнă, нимӗнле револђутси çинђен те калаçма та май çук пек туйăнаť. Анђах апла шухăшлани пӗртте тӗрӗс

мар. Епĕ ку таранђђен кăпиталисăмшăн аван паллăсем, кăпиталисăм çирĕпленнине кăтартакан паллăсем çинђен каларăм. Кăпиталисăм хирĕçĕвĕсем пĕтменни, кăпиталисăм вăхăтлăха çех çирĕпленни мĕнрен курăнат? Кăпиталисăм çирĕпленни вăрçă умĕнхи пек хăвăрт пымасť, кăпиталисăм çирĕпленни пĕр пек, тӳрĕ çулпа пымасť, куккăрмаккăр çулпа пыраť. Вăрçă умĕн нумай вăхăт иртсессĕн криçĕссем пулса тăнă пулсассăн, халĕ ĕнтĕ кăпиталисăмшăн вăл самана иртсе кайнă, халĕ ĕнтĕ криçĕссем ђылай, йалан пĕр пек вăхăт иртсен тин пулнă пек пулса пымаççĕ. 1920-мĕш çулта пĕтĕм тĕнђери хуçайствă çĕкленни, 1921-мĕш çулта хуçайствă ӳкни палăрђĕ, 22-мĕш çулта çĕкленни, çав вăхăтрах Керманире вăйлă криçĕс, 24-мĕш çулта каллех ӳкни, 25-мĕш çулта каллех çĕкленни палăрђĕ, çав çулах Керманипе Анклире вăйлă криçĕс тапранђĕ. 26-мĕш çул ĕнтĕ Керманире криçĕс, Анклире çĕркăмрăк пирки тавлашу пулнипех иртсе кайаť. Кăпиталисла патшалăхсен хуçайстви кашни çулах кĕç çĕкленни, йе тата кĕç айалалла кайма тапратни пуршуаçиллĕ патшалăхсем сивĕ ђире йернĕ майлă саманара пурăннине кăтартаť. Унтан тата епĕр Йевроппăри вăрçăђђен кăпиталиссем курман-илтмен криçĕс пуррине куратпăр. Хаљ Йевроппăра, çийелтен пăхсассăн, ниçта хума çук тавар туса тултарнă пек курăнаť.

Ку ĕнтĕ ђăнахах çапла пулсассăн, кăпиталисла патшалăхсен хуçайстви питĕ ӳссе кайнине кăтар-

тĕђђĕ. Анђах вăл апла мар. Кăпиталисла патшалăхсен хуçайстви ниçта хуми çуках тавар туса тултармаллăх ӳсмен. Рапођђисемпе хресђенсене таварсем кирлĕ, нуша кураççĕ вĕсем. Анђах пĕтĕм тĕнђипе вăрçă пулнă пирки, рапођђисен ĕç укçине ђакарнă пирки, криçĕссем, тĕрлĕрен хирĕçӳсем пулнă пирки пĕтĕм тĕнђери пролеттариатпа хресђенсем çаралса, ђухăнланса йулнă, çавăн пирки ђи кирлĕ таварсенех илме пултараймаççĕ. Çапла ĕнтĕ тепĕр йенђен кăпиталисăма, рапођђисемпе хресђенсен кăпиталиссен таварне илмеллĕх укçатенкĕ çук пирки те криçĕс, сивĕ ђир силлет. Çакă ĕнтĕ кăпиталисăмăн, тата классен çапăçăвĕн çулйĕрне кăтартса пыраť, вăл классен хирĕçĕвĕ йăвашланассине мар, классен хирĕçĕвĕ вăйланса пырассине кăтартаť. Çакăн пек çул çинђе тăраť кăпиталисăмăн малашнехи кунçулĕ: вăл çул кăпиталисăм выçăхса имшерленмелли çул, кăпиталисăма криçĕссем пит хускалантармалли çул.

### Совет Сойусĕн хуçайстви патмар, тĕреклĕ çирĕпленсе пыраť.

Халĕ ĕнтĕ Совет Сойусĕ çинђен калăпăр. Йут патшалăхсен—хăшпĕрин хуçайстви ӳсни çинђен, хăшпĕрин кайалла кайса пыни çинђен каланă хыççăн, ытти патшалăхсемпе пĕрлех сотсиалисăмлă патшалăх çинђен те калама тивĕçлĕ. Çирĕпленети пирĕн хуçайства, мĕнле вăл çирĕпленет? Вăхăтлăха çирĕпленети Совет Сойусĕн хуçайстви, йе тĕреклĕ,

патмар, хуçайствăн сотсиалисăмлă пайĕсене вăйлатмалла çирĕпленети? Ђыфăрсем мĕн кăтартаççĕ? Акă мĕн кăтартаççĕ вĕсем: епĕ вăл ђыфăрсем çинђен ПСК(п)П Ђăвашопкомĕн 6-мĕш пленăмĕн ĕçĕсем çинђен токлат тунă ђух каланăђђĕ, халĕ ĕнтĕ вĕсем пăртак улшăннă, тата хутшăннă—1926-мĕш çулта Совет Сойусĕн йалхуçайствийĕ 11.124 мĕлйун тенкĕлĕх тупăш панă, пĕлтĕр йалхуçайстви тупăщĕ 9031 мĕлйун тенкĕ пулнă. Çапла вара йалхуçайстви тупăшĕ пĕр çул хушшинђе 23 прођђăн ӳснĕ.

Патшалăх промышлĕннăçĕн 25—26 çулхи тупăшне 24—25-мĕш çулхи тупăшĕпе танаштарсан—вăл 42 прођђăн ӳснĕ, тенкĕпе шутласан 5.333.000 тенкĕлĕх ӳснĕ. Патшалăх пӳтшеђĕ кăçал 4 мĕлйарт тенке çитрĕ, йут патшалăхсене 685 мĕлйун тенкĕлĕх тавар сутнă, йут патшалăхсенђен 730 мĕлйун тенкĕлĕх тавар кӳнĕ. 1921-мĕш çулта пирĕн хуçайствă питĕ йухăнса çитнĕђђĕ, епĕр выçлăхпа аптраттăмăрђђĕ, кашни çийекен çын пуçне пĕрер ђĕрĕк сĕлĕ çăкăрĕ парађђĕç, 25—26-мĕш çулта пирĕн пӳтшет 4 мĕлйарт тенке çитрĕ, йалхуçайстви 4 мĕлйарт пăт таранђђен пĕрђеллĕ тырă тăваť.

1926—1927-мĕш çулта пирĕн çĕнĕрен хапрăк-савăтсем тума, електритсă стантсисем лартма 1 мĕлйарт та 50 мĕлйун тенкĕ расхут тумалла,—вăл Совет Сойусĕшĕн питĕ пысăк çĕнтерӳ. Йут патшалăхсенђен кăçал, пĕлтĕрхинђен 3 хут ытларах, хапрăк-савăтсем тума кирлĕ хатĕрсем кӳмелле тунă,

ђӗр тавара та сарӑлса, ӳссе пыракан промышлӗннӑҫа вађђи кирлӗ таран кӳмелле. Ҫакӑн пек кӑтартаҫҫӗ пирӗн хуҫайствӑ ӳснине ђыфӑрсем. Пирӗн хуҫайствӑ пуршуаҫиллӗ патшалӑхсен хуҫайствинђен аванрах та, хӑвӑртрах та ӳссе пырать. Кӑпиталисла патшалӑхсен хуҫайствине пӗрпӗрин хушщинђи хирӗҫӳсем, классен хирӗҫӗвӗ ђӑрмантарать, пирӗн ун пек хирӗҫӳсем ҫук. Ҫавӑнпа та кӑпиталисла патшалӑхсен пек мар, Совет Сойусӗн хуҫайстви малашне те ҫирӗпленсе пыма, ӳссе пыма пултарать. Пирӗн тата ӗҫ ҫулӗ ҫинђе ҫитменлӗхсемпе кансӗрлӗхсем пурши? Паллах пур. Анђах пирӗн ҫитменлӗхсем кӑпиталисӑм хирӗҫӗвӗ майлӑ мар, пирӗн ҫитменлӗхсенђе кӑпиталисӑм хирӗҫӗвӗн тӗсӗ те ҫук. Пире оппӑт сахаллипе укҫатенкӗ ҫитменни кансӗрлет. Пирӗн ҫитменлӗхсем малалла кайнӑҫемӗн сирӗлсе пыма пултараҫҫӗ, кансӗрлӗхсене сирме пирӗн май пур. Пирӗн ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшнисене кӑпиталисӑм ҫитменлӗхӗсемпе танаштарма май ҫук, танаштарма йурамасть те.

### Оппоҫитсисем сотсиал-темократсен йуррине йурлаҫҫӗ.

Кӑпиталисӑм вӑхӑтлӑха ҫирӗпленнӗ майӗпе кӑпиталисла патшалӑхсем криҫӗс вӑхӑтӗнђен тапаланса пӑртак тухрӗҫ. Йулташсем! пӗтӗм тӗнђери ӗҫсемпе пурӑнӑҫ улшӑнса пынӑ майӗпе—кӑпиталисӑм вӑхӑтлӑха ҫирӗпленни, пирӗн ҫӗршывра сотсиалисӑм тӑвас ӗҫ йӑвӑрри,—кӑшпӗр комуниссен парт-

тийёсенђе халђхи саманана йăнăш пахалакан ушкăнсем (ђи сулахайа, ђи сылтăма сулăнакан ушкăнсем) тухса пыраççĕ. Пирĕн парттире оппоçитси пур, ытти патшалăхсенђи комуниссен парттийёсенђе те оппоçитсисем пур, вĕсем халђхи саманана пĕртте пахалама пĕлмеççĕ. Çавăнпа та оппоçитсисен политтĕкĕ, вĕсен мĕнпур ĕçĕсем пур оппоçитсисем те сотсиал-темократсен йенне сулăннине кăтартаççĕ, оппоçитсисем пурте сотсиал-темократсен йурринех йурлаççĕ.

### Классен хирĕçĕвĕ ÿсесех пыраť, рапођђи клас револђутси йенне сулăнаť.

Мĕнле пыраťха халĕ, кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленнĕ, кăпиталисăм хуçайстви йĕркеленнĕ вăхăтра револђутси йухăмĕ? Акă мĕнле: Кăпиталисăм çирĕпленнĕ пирки классен хирĕçĕвĕ татах вăйланса пыраť, мĕншĕн тесен кăпиталисăм рапођђи класа хĕстернипе çирĕпленет. Çавăн пирки халĕ епĕр классен хирĕçĕвĕ, классен кĕрешĕвĕ вăйланнине куратпăр, анђах классен кĕрешÿвĕ вăйланнипе рапођђи клас револђутси йенне сулăнса—комуниссен парттийĕсем патне çывхараймасť, рапођђи клас тÿрех кăпиталисăма ишме тытăнмасť, классен кĕрешĕвĕ хăйне майлă кукăрмакăр çулсемпе пыраť. Рапођђи клас револђутсиленесси револђутсиленет, анђах тÿрех пирĕн парттийе туртăнма тĕрлĕрен çулсемпе кыпаласа утса пынă пек çеç пыраť. Рапођђи клас револђутсиленни профсойуссенђе,

сотсиал-темократсен парттийĕсенђе, Анклири третйунионра, рапођђи парттире сулахай йенне сулăнакан ушкăнсем пурринђен курăнат̆. Анклири рапођђи парттире халђ сулахай йенне сулăнакан ушкăн ӳссех пырат̆. Керманири сотсиал-темократсен парттинђе те сулахай йенне сулăнакан ушкăн пур, вĕсем хăшпĕр ђух хăйсен парттине йертсе пыракансене хирĕç тăраççĕ, йертсе пыракансен ĕçĕсене тишкĕреççĕ. Тата ирĕклĕ опђĕствăсем те ӳссе пыраççĕ, сăмахран, Керманире Хĕрлĕ Фронтовиксем. Тĕрлĕрен конферентсисем пула пула иртеççĕ, Совет Сойусне телекатсисем килекиле кайни те рапођђи клас сулахай йенне сулăннинех кăтартат̆. Анклири çĕркăмрăк ђавакансен пастовкки те рапођђи клас сулахай йенне сулăннинех кăтартат̆, кунта ĕнтĕ Анклипе Совет Сойусĕнђи профсойуссен комиттеђĕ те сахал мар ĕçлерĕ. Рапођђи клас револютсиленни, йулташсем, пирĕн çакăн пек çулпа пырат̆. Рапођђи клас тӳрех комуниссен парттине туртăнмаст̆, ытти парттисенђе сулахай йенне сулăнакан ушкăнсем тухса пыраççĕ. Мĕншĕнха вăл апла? Рапођђи клас тӳрех пирĕн парттийе кĕрсен аванрах пулĕђђĕ-ши? Аван пулĕђђĕ те, анђах рапођђи класăн темиçе çул пухăнса пынă йăлисем пур, вĕсене вăл труках пăрахма пултараймаст̆, çавăнпа вăл кукăрмакăр çулпа Комиттерн патне пуршуаçипе кĕрешме пырат̆.

Çак каланисем пĕтĕм тĕнђери револютсиллĕ йухăмра çĕнĕ ĕçсем, анђах оппоçитси вĕсене хисепе

илмест, оппоçитси çавăрăнса та пăхасшăн мар çак ĕçсем çине. Оппоçитси кăпиталисăм çирĕпленнине курмасť, çавăнпа вăл массăна халех кăпиталисăмпа çапăçма тухма ђĕнни—улталани вырăнне анђах. Мĕншĕн тесен кăпиталисăм çирĕпленнĕ вăхăтра вăйпах кăпиталисăмпа кĕрешме тухма май çук. Комиттерипа комуниссен парттийĕсем, тата Совет Сойусĕнђи Профсойуссен Тĕп Совеђĕ Анклипе Совет Сойусĕнђи Профсойуссен Комиттетĕнђе çак йенђен тĕрĕс çулпа пынă, тĕрĕс майсемпе ĕçленĕ. Мĕн йенђен пит паллă пирĕн парттишĕн, тата Профсойуссен Тĕп Совеђĕшĕн Анклири çĕркăмрăк ђавакансен пастовкки? Пирĕн профсойуссем Анклири çĕркăмрăк ђавакансен пастовккине йертсе пыраççĕ; унта епĕр пĕтĕм тĕнђери рапођђи класпа пĕр пулса, пĕтĕм тĕнђери рапођђи класăн пĕр пулса кĕрешмелле, пĕрпĕрне мĕнле пулăшмаллине кăтартатпăр, тата Анклири çĕркăмрăк ђавакансемпе пĕр пулса кăпиталиссемпе куçа кĕретĕн кĕрешме тухса мĕнле кĕрешмеллине кăтартатпăр. Оппоçитси Анклипе Совет Сойусĕнђи Профсойуссен Комиттетне салатса йарасшăн, пирĕн телекатсене унтан кайалла ђĕнсе илесшĕн пулђĕ. Вăл питĕ пысăк йăнăш, халђхи саманара ăçта мĕнле май пур, çавăнпа усă курмалла. Анклипе Совет Сойусĕнђи Профсойуссен Комиттеђĕ пире Анклири рапођђисемпе çыхăну тытма кирлĕ, унта епĕр Анклири рапођђисене йертсе пыракансем урлă, тӳрех рапођђисемпе çыхăну тытатпăр.

Ҫак ёҫсем пурте епӗр хаљхи саманара тӗрӗс лини, тӗрӗс политтӗк тытнине кӑтартаҫҫӗ. Малашне Совет Сойусӗнђи Профсойуссен Тӗп Совеђӗн активнӑҫне, Хӗрлӗ Профинттерн активнӑҫне, Коминттерн активнӑҫне тата ытларах ҫӗклентермелле.

Ӑна тума ытти патшалӑхсенђи комуниссен парттийӗсенђи йулташсене активлӑ ӗҫе ытларах хутшӑнтармалла,—вара ӑҫта мӗнле май пур, ҫавӑнпа усӑ курма пулаҭ. Активнӑҫа ҫӗклентерсе пырса епӗр малашне те рапођђи клас вӑйне пӗрлештерсе профсойуссем пӗр пулса ӗҫлессине ҫирӗплетсе, тата комуниссен парттийӗсене полђшевисатсилесе пырӑпӑр. Вара ђи сулахай, ђи сылтӑм йенне сулӑнакан ушкӑнсем текеннисене ҫӗнтерсе, тӗрӗс ҫулпа кайӑпӑр. Ҫаксем хаљхи саманари комуниссен парттийӗсен ҫывӑх сатађӗсем. Кунтан ӗнтӗ оппоҫитси йӑнӑшни виттӗр курӑнса тӑраҭ, оппоҫитси ҫулӗпе кайнӑ пулсассӑн пӗтӗм револђутсийе пӗтерни анђах пулаҭђӗ. Ҫиновйӗв кӑпиталисӑм ҫирӗпленменни ҫинђен акӑ ҫапла калаҭ:

«Йапалана ҫийелтен анђах пӑхмасан, ӑна кӑпиталисӑм хуҫайствин» «шӑмми-шаккине» пайӑн пайӑн уйӑрса пӑхма пӗлсен, ҫак ҫулта пулнӑ ӗҫсем кӑпиталисӑм ҫирӗпленменнине кӑтартрӗҫ, теме пулаҭ. Анклири пастовккӑ кӑпиталисӑм тепӗр хут ҫирӗпленни ҫинђен ыйту лартаҭ, ыйту лартаҭ те, ӑна ҫӗнӗлле, ку таранђђенхинђен урӑхла татса параҭ».

(Ҫиновйӗв—«Анклири пастовккӑ ҫинђен каланӑ сӑмахран». «Правда» хаҫатра ҫапӑннӑ. 5/VI—26 ҫ.).

«Епĕ çапла шутлатăп: кăпиталисăм çирĕпленни мар, кăпиталисăм тепĕр хут йĕркерен тухни анђах пулђĕ. Кăпиталисăм карапне çилтăвăл çĕмĕрет, ăна кĕç сылтăм йеннелле, кĕç сулахай йеннелле тайăлтарат̆. Карап сылтăм йенне тайăлнă ђух, паллă, вăл рапођђи клас çине пусат̆. Анђах çавах та кăпиталисăм карапне çилтăвăл çĕмĕрет. Çирĕпленни вăл пăркаланманни пулат̆, пайан кăпиталисăм сылтăм йенне тайăлат̆, ыран сулахай йенне, ăçта вара унта кăпиталисăм çирĕпленни пултăр». (Çиновйĕв— «Анклири ђапла ĕçсем». Стр. 79—80).

Паллă ĕнтĕ, йулташсем, епĕр çак çулпа каймарăмăр. Вăл çулпа кайнă пулсан, Сталин йулташ конферентсире каланă пек, рапођђи класа улталани, рапођђи клас ĕçне пĕтерсе лартни пулĕђђĕ.

Сталин йулташ парттин 14-мĕш сйесĕнђе кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленни çинђен çапла каланă: „кăпиталисăм происвотстви, сутуилĕвĕ, тата укçитенки вăрçă хыççăн аварăнса, йĕркерен тухса кайнă вăхăтран тухат̆, тухнă та. Партти ăна кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленни, терĕ. Мĕне пĕлтерет вăл? Кăпиталисăмлă патшалăхсен происвотствипе сутуилĕвĕ вăрçă хыççăнхи криçĕс вăхăтĕнђе (епĕ 1919—20-мĕш çулсене астутаратăп) питĕ нађар пулнă, халĕ ĕнтĕ малалла кайма пуçларĕç, буршуаçин политтĕклĕ влаçĕ те пăртак çирĕплене пуçларĕ. Вăл кăпиталисăм вăрçă хыççăн кĕрсе ӳкнĕ ланкашкаран вăхăтлăха тапаланса тухнине пĕлтерет. (Сталин —14-мĕш сйесăн стенокрафиллĕ отђођĕ, 9-мĕш тср.).

Кăпиталисăма çапла пахалани хаљ те çаплах йулаť, хаљ те хăйĕн хакне çухатмасť. Кăпиталисăм вăрçă хыççăн кĕрсе ўкнĕ ланкашкаран тапаланса тухрĕ, халĕ ĕнтĕ пайанах револютси тапранмалли самана çукха. Çавăнпа Коминттерн сатађĕ хаљ, комуниссен парттийĕсен пĕрелĕхне малашне те çирĕплетесси, рапођђи класăн вăйхăватне пухса пĕр çĕре пĕтĕçтересси, тата комуниссен парттийĕсене полљшевисатсилесси.

## Пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тăвасси.

Ку ыйту çинђен ĕнтĕ пирĕн партти йышăннă решшенисем пур. Партти решшенийĕсем пур пулсан, мĕншĕнха епĕр çак ыйтăва çĕнĕрен тапрататтăр? Тĕрлĕ йенне сулăнакансем, пăркаланакансем çине çавăрăнса пăхмасăрах ĕçе тытăнсан аванрах марши? Пирĕн партти тĕрĕс çулпа пынă, тĕрĕс политтĕк тытнă вăхăтра—парттире тĕрлĕ йенне сулăнакансем, пăркаланакансем, хамăр çĕршывра сотсиалисăм тума пултарассине шанманнисем т. ыт. те пур пирки партти çак ыйту çине çавăрăнса пăхмасăрах иртсе кайма пултараймасť. Мĕншĕн тесеҫ, пролеттариат парттийĕ, тата хресђен халăхĕпе (ђухăнпа вăтам хресђенпе) пĕрлешсе ĕçлекен пролеттариат хыпалакаласа çех ĕçлеме, „тен" çине, „телей" çине шанса ĕçлеме пултармимасť.

Пролеттариатпа унăн парттийĕн кашни вăхăтрах сотсиалисăм строиттĕлствипе пĕтĕм тĕнђипе пулас револютси çулĕ çинђи вăйсене пĕлсе тăрас

пулаť. Пăркаланакансем унталла-кунталла выђакалани, тата Совет Сойусĕнђе сотсиалисăм тума пултарассине ĕненменни пролеттариатăн вăй-хăватне хавшатса пĕтĕм тĕнђипе пулас револђутсийе сарăлма ђарса тăраť. Пролеттариатпа унăн парттийĕ хамăр çĕршывра сотсиалисăм тума пултарассине виттĕр пĕлсе тăнипе хăватлă. Сотсиалисăм тăвас ĕçе пĕлсе, пĕтĕм тĕнђипе пулас револђутси, тата хресђен халăхĕн (ђухăнпа вăтам хресђен) инттересĕсемпе çыхăнтарса ĕçлес пулаť. Çав вăхăтрах тата хресђен халăхне (ђухăнпа вăтамсене) йертсе пымалла.

Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн партти, ку таранђђен тунă ĕçсене тепĕр хут пăхса тухса, оппоçитси плокĕ мĕн каланине те тĕплĕ пăхса тухса, епĕр хамăр çĕршывра сотсиалисăмлă опђĕствă тăватпăр, тума пултаратпăр, терĕ.

Пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тăвас ĕç, пирĕн револђутси мĕнле пулнипе пĕтĕм тĕнђери политтĕк ĕçĕсемпе, тата кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленнипе çыхăнса тăраť. Çавăнпа та пирĕн партти хамăр çĕршывра сотсиалисăм тăвас ĕçе ĕçленĕ ђух, хамăр çĕршывра сотсиалисăм тума кирлĕ вăйхăвата шута илсе, пĕтĕм тĕнђипех пулас револђутсийе те нихăçан та асран йамасť.

Епĕр халĕ кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленнĕ саманра ĕçлетпĕр. Çавăнпа епĕр хамăрăн шалтипе тулти политтĕке те çакăнтан шутласа туса пыратпăр. Парттин 14-мĕш сиесĕ: „Пур майсемпе те

Совет Сойусёнђи пролеттариатпа—пётём тёнђипе пулас revoђутсин тёп никёсёпе,—хёвел анăçёнђи Йевроппăри пролеттариат, тата пусмăрта пурăнакан халăхсен пёрлешÿне çирёплетсе, пётём тёнђипе пулас revoђутсийе сармалла, тата çёнтермелле çулпа пырас“, тесе постановлени йышăннă.

Çакăн пирки халђхи вăхăтра епёр, пуринђен ытла, хамăрăн хуçайствă политтёкёпе хётёртсе пыратпăр. Пурте, вăл ÿстерсе калани мар, никама сиктерсе хăвармасăр, пётём тёнђери ёçхалăхё Расçейри Совет Республёкё çине пăхаççё... Ку тёлёшпе кёрешÿ пётём тёнђе лапкăшёпех сарăлђё. Çак сатађа (хуçайствă ёçёсене) епёр пурнăçа кёртсессён пётём тёнђипех парăнтармаллипе парăнтăрма пултаратпăр.

Çавăнпа та хуçайствă ёçёсем пирёншён пур ёçсенђен те уйрăмах пысăк, малта тăракан ёçсем пулса тăраççё, „çак фронтра пирён майёпе, йерипен (хăварт тума май çук) пёрмайах ÿссе, малалла кайса пырса çёнтерес пулăт“ (Ленин, XIV-мёш том, 1-мёш пайё, 282-мёш стр.).

Акă мёнле каланă Ленин йулташ. Халђхи вăхăтра епёр сотсиалисăм тунă ёçе пётём тёнђери пролеттари, пётём пусмăрта пурнакан халăх тинкерсех сăнаса, астуса пырăт, çавăнпа та пирён пётём тёнђипе пулас revoђутсийе сăмахпа каласа çех вăйлатса пымалла мар, сотсиалисăм тăвас ёç ăнăçне кăтартса вăйлатса пымалла. Çавăнпа та ёнтё пирён çёршывра сотсиалисăм тăвас ёç

пěр хамăршăн çех мар, пěтěм тěнђери револютсишěн те пысáк вырăн йышăнса тăрат. „Ку тěлěшпе кěрешӳ пěтěм тěнђе лапкăшěпех сарăлђě. Çак сатађа епěр пурнăçа кěртсессěн пěтěм тěнђипех парăнтармаллах парăнтарма пултаратпăр“.

Ленин йулташ вěрентнине астуса, тата хамăрăн вăйсене, хамăрăн ěçсене, пěтěм тěнђери ěçсене шута илсе,—партти темиçе хутђен те епěр хамăр çěршывра сотсиалисăм тума пултаратпăр, тăватпăрах, терě. Çак лини çинђен партти первейхи хут, парттин 14-мěш конферентсийě йут патшалăхсěнђи ěçсем çинђен, кăпиталисăм çирěпленни çинђен, пěр патшалăхра сотсиалисăм тăвасси çинђен йышăннă ресолютсире решшени йышăнђě. Пěр патшалăхра сотсиалисăм тăвасси çинђен вăл ресолютсире çапла каланă: „пěр патшалăхра сотсиалисăм тума (пěтěмпех, тусах çитерме мар) пулаťех, сотсиалисăм тăвас ěç пěр патшалăхра çěнтерме пултараť“.

Сотсиалисăма пěтěмпех тусах çитересси çинђен ресолютсире çапла каланă: „хире-хирěç тăракан икě опђěствă пур пирки кăпиталиссем çавăрса илес йенђен (плоккатă), хуçайствă йенђен ытти майсемпе пусмăрласран, хěçпăшалпа тапăнасран йаланах хăрушă. Сотсиалисăма пěтěмпех тусах пěтересси, сотсиалисăм çěнтермеллех çěнтересси ђылай патшалăхсенђе сотсиалисăмла револютси пулса çěнтерессинђен килет“.

Ресолютсин çак пайě, çěр çинђе Совет Сойусěпе йунашар кăпиталисăмла патшалăхсем те пур ђухне,

вĕсем йенђен Совет Сойусне йаланах хăрушши çинђен питĕ таса, полђшевикла кăтартса панă. Çак хăрушлăхсем пур, пирĕн вĕсене асран йама йура маст̆, ăна епĕр манмастăпăр та, çавăнпа та усăмлă калатпăр: сотсиалисăм пĕтĕмпех, тусах пĕтересси, сотсиалисăм çĕнтермеллех çĕнтересси,—урăхла каласан каллех пуршуаçи влаçĕ пулассинђен çăлăнасси—ђылай патшалăхсенђе сотсиалисăмла револютси пулса çĕнтересинђен килет.

Сотсиалисăма пĕтĕмпех, тусах пĕтересси çинђен ресолђутсире çапла каланă: çакăнта каланинђен кайа йулнă патшалăхра—Раççейра, технĕккăпа хуçайствă йенђен малта тăракан çĕршыври „патшатăхсен пулăшăвĕсĕр“ (Тротски) сотсиалисăм опђĕствине тума пулмаст̆, тени тухса тăмаст̆. Тротскин перманетнăй револютси ытти патшалăхсенђе пулас револютси вăраха кайни теорийĕн тĕп шухăшĕ тăрăх, „Раççейра ђăн-ђăн сотсиалисăмлă хуçайствă, Йевроппăри паллăрах патшалăхсенђи пролеттариат çĕнтерсен тин хăпарса, çĕкленсе пыма пултарат̆“. (Тротски, 1922-мĕш çул). Çак Тротски çулĕпе кайсан, Совет Сойусĕнђи пролеттариата нимĕн те тумасăр кĕтсе ларма ђĕнни анђах пулат̆. Çакăн пек „теорисем“ пирки Ленин çапла каланă: „Вĕсем калани ытла та вĕçĕмсĕр шаплонлă йапала пулса тăрат̆. Вĕсем ăна ђĕвеланăçри сотсиал-темократсем ўссе пынă ђух вĕреннĕ. Вĕсем епĕр халђ сотсиалисăм тумалăх ўссе çитменха, теççĕ. Вĕсенђен тĕрлĕ „вĕреннĕ“ хоспотасем калашле, пирĕн сотсиалисăм

„тума кирлĕ майсем (об‘ективные условия) çук“ пулат вара (Сухханăв çинђен сырнинђен) (Комунисла Инттернатсионал Ĕçтăвкомĕн аслă пленăмĕ пирки „Комунисла Инттернатсионалпа РКП(п) сатађĕсем“ çинђен Парттин 14-мĕш конферентсийĕ йышăннă ресођутсирен).

Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн парттин, пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тума пултарасси çинђен татăклă кăтартакан решшенисем. Хађхи вăхăтра пĕрпĕрне хире хирĕç тăракан икĕ опшђĕствă: пĕр йенђен Совет Сойусне хирĕç тăракан кăпиталисăмла патшалăхсем, тата тепĕр йенђен, хуçайствăра сотсиалисăмлă пайĕ вăйлăрах, сотсиалисăм тума пултаракан Совет Сойусĕ пур пирки кăпиталисăмла патшалăхсем йенђен Совет Сойусне йаланах хăрушши—пирĕн çĕршывра сотсиалисăма пĕтĕмпех тусах пĕтерме çукки çинђен каламасть. Пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тума пултарасси çинђен, пирĕн партти темиçе хутђен те татăклă решшенисем йышăннă пулин те, оппоçитси плокĕ епĕр сотсиалисăм тума пултарнине ĕненмест.

Çакă хирĕçўсем хађ тин кĕтмен çĕртен сиксе тухман. 1915-мĕш çултах, империалисăм малашне мĕнле çулсемпе ўссе пырассипе пĕр уйрăм çĕршывра сотсиалисăм çĕнтерессн çинђен ыйту тапрансан, Ленин йулташ пĕр çĕршыврах сотсиалисăм çĕнтересси çинђен кăтартнă. Ленин йулташ—ун ђухнех çапла çырнă: „Пĕтĕм тĕнђери пĕрлешўллĕ штат“, тенĕ лосăнк, хăй тĕллĕн уйрăм лосăнк

пулсан, вăл тĕрĕс пултарайрĕши, мĕншĕн тесен, пĕр йенђен вăл лосăнк сотсиалисăмпа хутăшса кайаť, тепĕр йенђен, вăл пĕр уйрăм çĕршывра сотсиалисăм çĕнтересси çинђен, тата сотсиалисăм çĕнтернĕ патшалăх ытти патшалăхсем çине мĕнле пăхасси çинђен йăнăш шухăшсем кăларма пултараť. Хуçайствă, тата политтĕк йаланах пĕр пек ўссе пыманни темле пулсан та кăпиталисăм сакконех вăл. Çакăнтан ĕнтĕ малтанах сахал патшалăхсенђе, йе тата пĕр уйрăм кăпиталисăмла патшалăхрах та сотсиалисăм çĕнтерме пултарни паллă. Çĕнтернĕ патшалăхри пролеттариат кăпиталиссен пурлăхĕсене туртса илсе, хăйсен çĕршывĕнђе сотсиалисăмлă происвотствà туса, кăпиталисăмлă тĕнђене хирĕç тăрса, ытти çĕршывсенђе пусмăрта пурнакан классене хăйне майлă туртса тăрĕђђĕ, кăпиталисла патшалăхсенђе кăпиталиссене хирĕç восстаңисем тăвĕђђĕ, кирлĕ пулсан, кăпиталиссен класĕпе вĕсен патшалăхĕсене хĕçпăшалпа та хирĕç тăрĕђђĕ“ мĕншĕн тесен „натсисем хăйсен ирĕкĕпе сотсиалисăма пĕрлешме, сотсиалисăмлă респуплĕксем ытти кайа йулнă патшалăхсемпе нумайђен кĕрешмесĕр пултараймĕç“ (Ленин, 13-мĕш том, 133 стр.).

Ленин йулташ питĕ тĕлĕнмелле уçăмлă, таса пĕр патшалăхра сотсиалисăм çĕнтерме пултарасси çинђен калаť; тата унтах кăпиталиссене хирĕç тăнă пролеттариатăн сатађĕсене кăтартса параť. Тротски, Ленин статйине вуланă хыççăн, çапла çыраť:

„Хуçайствӑ, тата политтĕк йаланах пĕр пек ӳссе пыманни темле пулсан та кăпиталисăмăн сакконех пулат. Çакăн пирки „Сотсиал-темократ“ (пољшевиксен хаçаҕĕн йаҕĕ. Кунта Ленинăн çӳлте кăтартнă статйине çапнă) çапла калат: Сотсиалисăм пĕр çĕршывра çĕнтерме пултарат, çавăнпа та кашни уйрăм патшалăхри пролеттариат тиктаттурине Йевроппăри пĕрлешӳллĕ штатпа çыхăнтарма кирлĕ мар. Кашни уйрăм патшалăхра кăпиталисăм пĕр пек ӳссе пыманни çинҕен тавлашу çук. Анҕах çак пĕр пек ӳсменни хăй те пĕр пек мар. Анкли, Австри, Кермани, Франтси кăпиталисăмĕ пĕр пек мар. Анҕах Африккăпа тата Аçипе танлаштарас пулсан çак патшалăхсем сотсиалисăмлă револ̆ютси тума пиçсе çитнĕ Йевроппăри кăпиталисăмлă патшалăхсем пулса тăраççĕ. Пĕр патшалăхăн та ытти патшалăхсене кĕтсе тăмасăрах кĕрешме тытăнасси ĕнтĕ вăл пурте пĕлсе тăракан шухăш; ун çинҕен пăрмайах калани усăллă, калас пулат... Ыттисене кĕтсе тăмасăрах епĕр, пĕр çĕршывра кĕрешме пуçлатпăр та, епĕр пуçласа йанă ĕç ытти патшалăхсенҕе те кĕрешӳ тапратса йарасса шанса тăратпăр; çакăн пек пулас пулмасан,—сăмахран револ̆ютсиллĕ Раççей Йевроппă умĕнҕе тытăнса тăрасси çинҕен, йе сотсиалисăмлă Кермани кăпиталисăм тĕнҕинҕе пĕр пĕҕҕен уйрăм татăлса йуласси çинҕен шухăшламалли те çук, шухăшласан та шанăç çук. Ун çинҕен оппăт та, теори те çапла калаççĕ“. (Тротски, 3-мĕш том, 1-мĕш пайĕ, 89,90-мĕш стр.).

Çак икĕ, Ленинпа Тротски çырнă, татăксенђен епĕр пĕр çĕршывра сотсиалисăм тăвасси çине икĕ тĕрлĕ пăхнине куратпăр.

Тротски йулташ, çĕнтернĕ çĕршыври револютси ытти патшалăхсенђе револютси тапратса йараймасан, ытти патшалăхсенђе револютси çĕнтереймесен,—револютси çĕнтернĕ çĕршыври пролеттариат влаçа тытса тăма пултараймасť, халехи йе кайрани вăл влаçăн пĕтсе лармалла пулаť, тесе шутлаť.

Ленин йулташ—пĕр патшалăхра сотсиалисăм тума пулаť, çĕнтернĕ пролеттариат влаçа хăй аллине илсе, сотсиалисăмлă хуçайствă туса, кирлĕ пулсассăн, ытти патшалăхри пролеттариата пулăшма кăпиталиссене хирĕç хĕçпашалпа тухма пултараť,—тесе шутлаť.

Еккономĕккăн çĕнĕ политтĕкне куçнăранпа пирĕн Партти çак ыйтăва пĕр хут çех лартман. 1921-мĕш çулта, „рапођђи оппоçитси“ текен парттири оппоçитси Ленин йулташа, еккономĕккăн çĕнĕ политтĕкне туни сотсиалисăм çулĕ çинђен пăрăнни пулаť, тесе айăпланă. Ленин йулташ хăй тухса каланă сăмахсенђе те, çырнă статйасенђе те, епĕр еккономĕккăн çĕнĕ политтĕкне пурнăçа кĕртсе хамăр çул çинђен пăрăнмаспăр, епĕр çĕнĕ майсемпе „хресђенсемпе пĕрле“, ĕçлекенсен класĕ йертсе пынипе сотсиалисăм çулĕпех малалла кайатпăр, тесе темиçе хутђен те кăтартнă.

Тротски йул. Ленин йулташа хирĕç каланă пек пулса, пирĕн çĕршывра хресђенсемпе пĕрле сот-

сиалисăм тума пулаймасť, мёншён тесен пурнăçра рапођђи класпа хресђенсен хушшинђе хирĕçӳсем пулма пултараççĕ, пĕтĕм тĕнђери револђутси пире пулăшмасан, револђутсийе хирĕç пыракан хресђенсем пролеттари тиктаттурине сирпĕтсе йама пултараççĕ,—тесе статйасем çырса, пĕрмайах хăй каланинех каласа пыраť. Ленин йул. партти линийĕшĕн тăрса татах çапла калаť: 10—20 çул хушши хресђенсемпе килĕштерсе, тĕрĕс сыхăну тытса пырсассăн, пĕтĕм тĕнђери револђутси нумайя тăсăлсассăн та,—вăл ӳссех пыраť,—пĕтĕм тĕнђипех çĕнтересси курăнсах тăраť", тет.

„Копператси" çинђен çырнă статйасенђе Ленин тата малалла çапла çыраť:

„Шултăра происвотствă патшалăх аллинђе, патшалăхри влаç пролеттариат аллинђе, влаçа хăй аллинђе тытакан пролеттариат темиçе мĕлйун вактĕвек хуçайствăллă хресђенсемпе пĕрлешӳ, çыхăну тытаť, пролеттариат хресђенсене йертсе пыраť, т. ыт. те,—ку ĕнтĕ мĕн кирли пурте мариха, копператсирен, пĕр копператсирен анђах,—ун çине епĕр услам тăвакан орканисатси çине пăхнă пек пăхнă, халђ—еккономĕкăн çĕнĕ политтĕкĕ вăхăтĕнђе те пăртак çав майлăрах пăхма пултаратпăр,—ку ĕнтĕ сотсиалисăмлă опђĕствă пĕтĕмпех, тусах пĕтерме мĕн кирли пурте мариха? Ку сотсиалисăмлă опђĕства пĕтĕмпех, тусах пĕтерни мар, сотсиалисăмлă опђĕ-

ПСК п)П 15-мĕш конферентси çĕсем.

ства пётёмпсх тусах пётерме мён кирли". (Ленин, 18-мёш том, 2-мёш пайё, 140-мёш стр.).

Ленин йулташпа партти каланă тăрăх сотсиалисăмлă опђёствă тума мён кирли пирён пурте пур. Мён калатха оппоçитси пёрлешёвё, Тротски йулташ пуç пулса тăракан оппоçитси пёрлешёвё çак ыйту пирки? Оппоçитси плокё технёккăпа хуçайствă кайа йулнă пирки хамăрăн йăвăрлăхсенђен епёр хамăрах, пётём тёнђери револђутси пулăшмасăр хăтăлаймастпăр,—тесе шутлаŧ. Оппоçитси плокён шухăшё майлă пулас пулсан, епёр сотсиалисăм тума пултараймастпăр пулаŧ. Апла пулсан вара ирёксёрех çапла пулаŧ: йе Совет влаçён хăйёнех пётсе лармалла, йе пуршуаçи хупăрласа илмипе пуршуаçиллё темократти респуплёкё пулса тăмалла. Çакăнтанах тата пирён револђутси майё (характёрё) çинђен те ыйту тухса тăраŧ.

Пирён хамăрăн çёршывра сотсиалисăм тума кирлё майсем çук пулсан, вара пирён револђутси те сотсиалисăмлă револђутси мар, пуршуаçипе темократтиллё револђутси пулса тăраŧ. Вара пирён патшалăх претприйаттийёсем те сотсиăлисăмла претприйаттисем мар пулса тăраççё, вара пролеттари тиктаттурён сотсиалисăмлă йенёсем те сирёлеççё. Вара пирён патшалăх та сотсиалисăмлă патшалăх мар пулса тăраŧ, вара Ленин йулташăн копператси планёсем те сирёлеççё т. ыт. те. Вара пирён хуçайствăра кăпиталисăмлă пайё вăйлăрах, пирён парттипе Совет влаçё те урăх майлă пулса

кайни пулаҫ. Урăхла каласан, пирĕн револютсии характĕрĕпе ҫулĕсем пирки сотсиал-темократсен, тата II-мĕш Инттернатсионал ҫулĕ ҫине тăмалла пулаҫ.

Оппоҫитси плокĕ пролеттариатпа хамăр ҫĕршыв вăйне ĕненмесĕр, хресҙенсене хамăр союҫвĕксем вырăнне хумасăр, хирĕҫле вăй вырăнне хурса, сотсиалисăмлă промышлĕннăҫпа йалхуҫайствине хирĕҫтерсе, промышлĕннăҫа йалхуҫайствинҙен уйăрса йарас ҫул ҫине тăраҫ. Ҫавăнпа та ĕнтĕ оппоҫитси хресҙен хуҫайствине колоҙи вырăнне шутлаҫ, хресҙенсенҙен налок укҫи ытларах шăйăрса илсе, промышлĕннăҫ таварĕсен хакĕсене хăпартса, хамăр ҫĕршыва интустриалисатсилеме кирлĕ укҫатенкĕ тупма шутлаҫ, т. ыт. те.

Партти ҫак ҫул ҫине тăма пултараймасҫ. Партти рапоҙҙи класпа хресҙенсен пĕрлешӳне хытă сыхлама шутлаҫ. Пролеттариатăн сотсиалисăм тăвăс ĕҫре, 1917-мĕш ҫулта влаҫа туртса илме ҫапăҫнă ҙухнехи пекех, хресҙенсене (вăтампа ҙухăна) йертсе пымалла.

Рапоҙҙи класпа хресҙенсен пĕрлешӳне сыхлася тăма сотсиалисăмлă промышлĕннăҫпа хресҙен хуҫайствин ҫыхăнăвне тĕреклетсе пыракан политтĕк кирлĕ. Налок политтĕкĕпе промышлĕннăҫ таварĕсен хакĕсен политтĕкне пирĕн партти ҫаксене асра тытса туса пыраҫ.

Пирĕн парттире — хамăр ҫĕршывра сотсиалисăм тăвасси пирки пулнă тавлашусене пăхса тухса. Конференци ҫапла решшени йышăнҙĕ: Тротски, тата

унпа пěр пек шухăшлакансем пирěн револютси характěрěпе малашнехи çулě çинђен каланисем, пирěн партти шухăшланипе, ленинисăмпа пěртте çыпăçмаççě. Конферентси оппоçитси сотсиал-темократсен йенне сулăннине кăтартрě. Сотсиалисăм тăвасси çинђен Конферентси çапла каларě:

„Партти хăйěн ěçěсене çакăнтан шутласа тăваť: пирěн револютси сотсиалисăмлă револютси, Октăпěр револютсийě хěвеланăçěнђе сотсиалисăмлă револютси тапратса йамалли вырăн, çикнал çеç пулса тăмасť, вăл çав шутах пěр йенђен пěтěм тěнђипе малалла сарăлса, вăйлăланса пыракан револютсин никěсě, тата тепěр йенђен, вăл Совет Сойусěнђе кăпиталисăмран сотсиалисăма куçакан вăхăт пулса тăраť (пролеттари тиктаттурě); çак вăхăтра хресђен ыйтăвěпе тěрěс политтěк тытса пырсан, пěр йенђен, тěнђипе револютси вăйхăвађě ўссе пырсан, тата тепěр йенђен, Совет Сойусěнђи пролеттариатăн Совет Сойусне империалиссенђен сыхласа тăма вăйхăвађě çителěклě пулсан, сотсиалисăм опђěствине пěтěмěшпех тума пултаратпăр“.

Акă мěн каларě парттин 15-мěш Конферентсийě хамăр çěршывра сотсиалисăм тăвассипе пирěн револютсин характěрěпе унăн малалли çулě çинђен.

## Партти ăшěнђи лару-тăрупа парттин çывăхри satađěsem.

ПСК(п) П 15-мěш конферентсийě партти ăшěнђи лару-тăру тěлěшěнђен историре паллă вырăн йы-

шăнса тăрат, терĕм епĕ токлат пуçламăшĕнђе. Екюномĕккăн çĕнĕ политтĕкне куçма тытăннă вăхăтранпа ПСК(п)П 15-мĕш конферентсиђђен, йе 5 çул хушши, епĕр парттире тĕрĕс çултан тĕрлĕрен пăрăнкаланисем, тĕрлĕрен йухăмсем куратпăр. Вĕсем пуçланса аталанса ÿссе пыђĕç („çĕнĕ оппоçитси"), йулашкинђен 15-мĕш конферентси тĕлнелле малтанхи тĕрлĕрен круппăсемпе оппоçитсисене пĕтĕçтернĕ оппоçитсиллĕ пĕрлешÿ пулса тăђĕ. Кунта пур оппоçитсисен историйĕ çинђен калама май та çук, çапах та „çĕнĕ оппоçитси" малтанхи тĕрлĕрен круппăсене, оппоçитсисене пĕтĕçтернĕ майĕпе каласах пулат. Пирĕн партти тĕрлĕрен йăвăрлăхсем курнă ђух, пĕр пысăк ĕçрен тепĕр ĕçе куçнă ђух, кирек хăçан та тенĕ пекех оппоçитси тухса пыђĕ. 1917-мĕш çулти Октăпĕрти револютси вăхăтĕнђе Çиновйĕвпа Камĕнĕв йулташсем ђи хастарлă çапăçуран малтанах пăрăнса йулђĕç, вара кайран çех хăйсем йăнăшнине тÿрлетрĕç. 1918 мĕш çулта та Совет влаçĕ тытăнса тăрасси иккĕлле вăхăтра, револютсиллĕ Раççейпе Кермани вăрçнă вăхăтра, „киревсĕр килĕшÿ" тумалла вăхăтра, Тротски йулташ ун ђухне те „вăрçă та мар, килешÿ те мар", тесе тăђĕ. Кунта та епĕр хастарлă кĕрешÿрен пăрăнса йулнине куратпăр, пĕр Ленин линийĕ çех çĕнтерсе пыђĕ.

Економĕккăн çĕнĕ политтĕкне куçнă ђух та епĕр тĕрлĕрен тĕрĕс çултан пăрăнкаланине курса пăхрămăр, сăмахран, профсойус ыйтăвĕ тăрăх, тата

темократтиллĕ ђентралисăм круппи те. Малашне, 1923-мĕш çулта, пирĕн Совет çĕршывĕ пысăк йăвăрлăхсем курса иртернĕ вăхăтра та Троцки йулташпа тата ытти хăшпĕрисем ĕçлекенсемпе хресђенсен çыхăнăвне хирĕç пыракан çĕнĕ платформăпа сиксе тухаççĕ, тата парттин Тĕпкомне парттипе Совет çĕршывне тĕрĕс çулпа йертсе пымасӑ, тесе айăплаççĕ. Унтан Троцки „Октăпĕр урокĕсемпе" сиксе тухат, 1925-мĕш çулта епĕр пуршуаçи йĕркинђен йулнă тĕп кăпитала вĕçне çитерсе, малалла мĕнле ÿссе пымалли çулсем шыранă вăхăтра та Камĕнĕвпа Çиновйĕв т. ыт. те пирĕн куçайствă строиттĕлствин йăвăрлăхĕнђен хăраса, парттин 14-мĕш сйесĕнђе партти линине хирĕç тухаççĕ.

1926-мĕш çулта епĕр кивелсе кавшанă капрăксавăтсене йусаса пĕтернĕ хыççăн вĕсене татах лайăхлатма, çĕнĕрен капрăк-савăтсем лартма тыттăннă вăхăтра, çавăнпа пирĕн йăвăрлăхсем татах нумайланнине кура рапођђи класпа унăн партти „тирпейлĕх" решимне ĕçе кӳртес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа курса кĕрешнĕ вăхăтра, пирĕн малашнехи ĕç çулĕ çĕнĕ строиттĕлствă пулнă вăхăтра, епĕр каллех пирĕн парттире тĕрлĕрен круппăсем пĕрле пĕтĕçсе çĕнĕ оппоçитси пĕрлешĕвĕ туса уçăмăнах парттипе кĕрешме тухнине куратпăр.

Ку оппоçитси пĕрлешĕвĕ 1912—14-мĕш çулсенђи авкустри пĕрлешĕве аса илтерет. 1912-мĕш çулта, 1905-мĕш çулти реакси иртнĕ хыççăн револђутси йукăмĕ вăйланма пуçласан, полђшевиксем патшана

сирпĕтес тесе, пĕтĕм çĕре хресђене парас тесе, ĕç кунне сакăр сехетлĕ тăвас тесе, каллех хăйсен умне сатађ лартнă. Ку сатађа ранођђнсемпе вĕсен парттийĕ пĕтĕм вăйа хурса, пĕр тытăнса тăмасăр, ĕçе йĕркеллĕ йертсе пынипе, тата партти пĕр ĕмĕтлĕ, пĕр шухăшлă пулнипе çех пурнăçа кĕртме май пулнă.

Çак йăвăрлăхсем ун ђухне сотсиал-темократсем—соклашшаттĕлсем хушшине хăрушă кўнипе вĕсем кăрăнкалама пуçланă, тата пролеттариат вăйне ĕненменнисем те пулнă. Пођшевиксем хăйсен ретĕнђен соклашшаттĕлсене, ликвитаттăрсене, тата тĕрлĕрен çыпçăнса пыракансене хăваласа йарса, хăйсем револђутси йухăмĕн пуçлăхĕ пулса тăраççĕ

Çав вăхăтра пур круппăсемпе ушкăнсем пĕрле оркарисатсиленеççĕ, пуçлăхĕнђе Тротски. Вара паторканисатсиленеççĕ, пуçлăхĕнђе Тротски. Вара партиш йĕркипе кĕрешес вырăнне пођшевиксемпе кĕрешме тытăнаççĕ. Халĕ пирĕн умра сотсиалисăм строиттĕлствин йăвăрлăхĕсем, киввине йусаса çитерпĕ вăхăтран çĕнĕрен хапрăк-савăт лартса промышлĕннăçа татах вăйлатас вăхăта куçасси; ку ĕç йăвăр, вăл ĕçпе пĕтĕм вăйхăвата хурса ĕçлемелле пулаť, çав йăвăрлăхсене курса тĕрлĕрен круппăсем оппоçитсионерсем каллех пĕрле пĕтĕççе оппоçитси пĕрлешĕвĕ тăваççĕ, пуçлăхĕнђе каллех Тротски, вара сотсиалисăм строиттĕлствин йăвăрлăхĕсемпе кĕрешес вырăнне йăвăрлăхсемпе кĕрешекен, сотсиалисăм хуçайствине тăвакан парттипе кĕрешме тытăнаççĕ.

Йулташсем! оппоçитси уççăмăнах парттийе хирĕç парттин 14-мĕш сйесĕнђе тухнине есĕр пĕлеттĕр, унта вăл Тĕп Комиттета вăл урăхланђĕ, вăл кулак сулăнђăклă, терĕ т. ыт. те. Çакăнпа пĕрлех пур круппăсене, оппоçитсионерсене пĕрлешме çикнал пађĕ, т. ыт. те. Çиновйĕв йулташ хăйĕн сăмахĕнђе каларĕ: „малашне парттийе мĕнле йертсе пымалла? парттин „çӳлтисене“ йепле орканисатсилемелле? Ђи малтанах, 1926-мĕш çул 1923-мĕш çул мар вăл. Иккĕмĕшĕ, парттире фраксисем тума ђарса, фракси ыйтăвĕсем тăрăх ĕлĕкхи поçитсисенђех йулса, çакăнпа пĕрлех Тĕп Комиттета пирĕн парттири пур круппăсен вăйне ĕçе йертсе, вĕсене Тĕп Комиттет йертсе пынипе ĕçлеме май парас. 1926-мĕш çулта çакна тумаллах. (*Шавлаççĕ. Претçетаттĕлĕн шăнкравĕ*, „Тепĕр кала“, *тенĕ сăмахсем*).

Епĕ татах калатăп: фракси ыйтăвĕсем тăрăх пирĕн малтанхи решшенисене пăхăнса, çав вăхăтрах Тĕп Комиттета пур йулташсене те ĕçе йертме калас, парттири малтанхи пур круппăсен вăйĕсене те. (*Шавлаççĕ. Моиççейенккă*: „Кампа выђаттăр есĕр“). Виççĕмĕшĕ, Парттин Тĕп Комиттет оркăнĕ çумĕнђи пирĕн йаланхи, ернере пĕрре тухакан, ĕçре пулакан тавлашуллă ыйтусене йулташсем хушшинђе сӳтсе йавма ирĕк паракан тискуççи оркăнĕ тумалла, тесе шухăшлатăп епĕ.

Пирĕн умра йăвăр сатађсем тăнă вăхăтра, тата пĕрпĕринпе тавлашнă вăхăтра унсăр пултараймастпăр епĕр, тесе шухăшлатăп епĕ. (*Шавлаççĕ*). (Парт-

тин 14-мĕш сйесĕн çтенокрафи отђођĕ. 467 стр. Çиновйĕв каланă сăмах).

Мĕне пĕлтерет Çиновйĕв ĕлĕкхи круппăсен вăйне ĕçе йертме ыйтни? Пирĕн партти, йе Тĕпком кашни парттийтсăнах хăйне йурăхлă ĕç парса ĕçлеттĕрместим? Пирĕн партти кашни парттийтсăнах ĕç парса ĕçлеттернине Çиновйĕв йулташ пит те аван пĕлет. Çиновйĕв йулташа ĕç кирлĕ мар, ăна парттийе хирĕç кĕрешме пĕрлешў туни кирлĕ пулнă. Çĕнĕ оппоçитси тавра пĕтĕм вăйа пĕтĕçтерни кирлĕ пулнă ăна, унăн сйесри ыйтăвĕ те „парттири решимпе“ кĕрешме пĕтĕм круппăсене, оппоçитсионерсене пĕтĕçме ђĕннĕ çикнал пулса тăђĕ.

Партти сйесĕ хыççăн сйесра тавлашу тата пĕтĕм оппоçитсионерсене пĕтĕçме çикнал панă пулсан та, Тĕп Комиттет парттин пĕрлĕхне сыхлас тесе мĕн тумаллине веçех турĕ, çавăнпах оппоçитсийе çйертсе пыракансене Политпўрона та кĕртрĕç. Çапах та оппоçитсионерсем хăйсен йăнăшуне йышăнмарĕç те, парттийе хирĕç карĕç. Оппоçитсионерсен пирвайхи пĕтĕçес утăмĕ апрелти пленăмра Рыккăв йулташăн „Хуçайствă лару-тăрăвĕ“ çинђен тунă токлат хыççăн пулђĕ, унта оппоçитси епĕр пысăк тавлашу пулнипе Тĕпком ресољутсийĕшĕн сасă лаймастпăр, тесе хăйĕн йусавĕпе (поправка) сотсиалисăм строиттĕлствинђи Ленин линине урăхлатма хăтланђĕç.

Апрелтен пуçласа ийуне çитеђђен тĕрлĕрен круппăсене пĕтĕçтерес тĕлĕшпе вăйран тухсах

ĕçлeççĕ, вăрттăн ĕç пулса пырать, вăрттăн литтературă саланать. Ийуљри пленăмра оппоçитси вара орканисатсиленнĕ вăй пулсах тухать. Çĕнĕ оппоçитси ђăнах хăй пĕрлешнине кăтартма унăн пуçлăхĕсем хăйсен теçĕсĕсемпе, парттийе хирĕç пыракан уйрăм платформăпа тухаççĕ.

Çĕнĕ оппоçитси пĕтĕм круппăсене пĕрлештерекен оппоçитсине кăтартмашкăн, çĕнĕ оппоçитсире Тротски йулташ та тăнине кăтартмашкăн, Çиновйĕвпа Тротски хушшинђи малтанхи тавлашăва халĕ ĕнтĕ архива панине кăтартмашкăн Çиновйĕв йул. калать: „Тĕпком ђленĕсенђен нумайĕшĕ каланă пек пролеттарлă линирен пăрăнни хăрушши çинђен, тата аппарат решимĕ хăрушă çитĕнсе пыни çинђен 1923 çулхи оппоçитсин тĕп ђăмăрĕ малтанах тĕрĕс каласа панă, ун пирки ним иккĕленмелли те çук, тетпĕр епĕр". Мĕн тет кунта Çиновйĕв? Тротски 1923-мĕш çулта тĕрĕс каланă, 1923-мĕш çулта партти пролеттарлă линирен пăрăнса кайса пуршуаллă шурлăха анса пыђĕ, тата аппарат решимĕ партти шухăшне хĕсеђђĕ, пăтратађђĕ, тет кунта Çиновйĕв йулташ.

Çапла вара Çиновйĕв пĕтĕмпех Тротски йенне сулăнать, ленинисăма тротскисăмпа улăштарать. Çапла вара Çиновйĕвпа унпа пĕрле пыракансем парттин 14-мĕш сйесĕн решшенийĕсене хирĕç çех мар, 13-мĕш сйесĕн решшенийĕсене те хирĕç пыраççĕ, мĕншĕн тесен 13-мĕш сйесра тротскисăма вак пуршуаллă сулăнђăк тесе хакларĕç.

Тротски хӑй ҫӗнӗ оппоҫитсипе пӗрлешни ҫинҌен ҫапла ӗнентерсе калаҭ: „ним иккӗленмесӗр Октапӗрӗн урокӗсенҌе“ епӗ политтӗк оппортунисла, тесе Ҫиновйӗвпа Камӗнӗв хушамаҌӗсене асӑнса каларӑм. Тӗп Комиттетри итейлӑ кӗрешӳ оппӑҌӗ кӑтартнӑ тӑрӑх ку пит те пысӑк йӑнӑш пулнӑ. Епӗ ҫиҌӗ ҫын хушшинҌи итейлӑ кӗрешӗве асӑрхаса пырайманнипе, тата оппортунисла политтӗк йеннелле сулӑнни Сталин йул. йертсе пыракан круппӑ Ҫиновйӗвпа Камӗнӗва хирӗҫ пынине вӑхӑтра ӑнласа илеймерӗм, вӑл йӑнӑш ҫакӑнта пулнӑ.

Ҫапла вара оппоҫитсин икӗ патмар, анҌахрах пӗрпӗринпе тавлашакан пуҫлӑхӗсем пӗрпӗрне амниҫти параҫҫӗ. Тротскисӑмшӑн ленинисӑма хирӗҫ, парттийе хирӗҫ кӗрешме „нумайлӑха йатарласах“ пӗрлешрӗмӗр, тенӗ пек калаҭ Ҫиновйӗв.

Ийуљри пленӑм хыҫҫӑн оппоҫитси пӗрлешӗвӗ уҫҫӑнах кӗрешме тухма хатӗрленет. Вӑрттӑн ӗҫ вӑйланаҭ, комиттетсем орканисатсиленеҫҫӗ, сопранисем пулса иртеҫҫӗ, активсен совешҌанийӗсем, т. ыт. те. Оппоҫитсийе йертсе пыракансем Тӗпком Политпӳровӗн Ҍленӗсен прависемпе усӑ курса парттин ҫекретнӑй хуҌӗсене урӑхлатса, хӑйсене кирлӗ майлӑ туса ҫапа ҫапа кӑлараҫҫӗ те, партти масси хушшине те, парттире тӑманнисем хушшине те салатаҫҫӗ. Вӑл хутсене хӑшпӗр Ҍух парттире тӑман машшинискӑсене те ҫаптарнӑ, парттире тӑман ҫынҫем те тытса усранӑ. Ҫак парттийе хирӗҫ пыракан орканисатсиллӗ ӗҫ хыҫҫӑн, оппоҫитси пӗр-

лешӗвӗ парттийе хирӗҫ пыракан вӑрттӑн литтераттурӑна партти массине хӑйсемпе пӗр шухӑшлӑ тӑвасшӑн салатса пӗтерсен, оппоҫитси пӗрлешӗвӗ хӑй вӑйне хатӗрлесе ҫитерсен, вӑл ҫенӗӗтапӗр уйӑхӗн йулашки кунӗсенђе тискуҫҫи ыйтса, парттин рапођђи йађђейккисене тухатӑ, вӑл вара уҫҫӑмӑнах парттийе хирӗҫ тухни пулатӑ.

### Оппоҫитсионерсем меншевиксен сӑмахӗсенех калаҫҫӗ. Йађђейккӑсем оппоҫитсине сивлерӗҫ.

Епӗр ӗнтӗ оппоҫитсионерсене йађђейккӑсенђе мӗнле хирӗҫ пулса илнине пӗлетпӗр. Йађђейккӑсем пурте оппоҫитсийе сивлерӗҫ. Партти масси хӑй ӳснине кӑтартрӗ, партти массин ӳсӗмӗ Ленин ҫулӗпе пынине, шанђӑклӑ Ленин ҫулӗнђен никама та пӑрӑнма парас ҫуккине кӑтартрӗ.

Оппоҫитси пирӗн парттипе халђђен курман, халђђен илтмен майсемпе кӗрешрӗ, ниме те тиркесе тӑмарӗ. Оппоҫитси пирӗн парттийе, тата Тӗп Комиттета мӗншӗн айӑплани, меншевиксем пирӗн парттийе мӗншӗн айӑпланинђен пӗртте уйрӑм мар. Оппоҫитсионерсем, Тӗп Комиттет урлӑ йађђейккӑсене тискуҫҫи (тавлашу) тапратса йама ђӗнсе, ҫапла калађђӗҫ: Сталин йулташ йертсе пыракан Тӗп Комиттет политтӗкӗ—пӗтмелли политтӗк анђах, партти улшӑнсах—пӗрмайах улшӑнсах пыратӑ, партти Тӗп Комиттетӗнђе ӗҫлекенсем—вӗсемпе пӗрлех Сталин та—револютси вађђи шӑтӑк ђавакансем, вӗсем пролеттариат револютсийӗн ҫулӗ ҫинђен

урӑх ҫӗрелле шуса ансах пыраҫҫӗ, парттийе йертсе пыракансемпе партти аппараґӗ парттийе мӑйран йарса илнӗ. Ҫапла каласа айӑплаґґӗҫ парттипе Тӗп Комиттета оппоҫитсионерсем. Оппоҫитсионерсем тата малалла та кайрӗҫ, парттипе Тӗп Комиттета тата акӑ ҫапла каласа айӑпларӗҫ: пирӗн патшалӑх пролеттариат патшалӑхӗ патне те пымасҭ, ҫӳлте пирӗн пӳрократтисӑмпа пӑсӑлса пӗтнӗ—унта массӑран уйӑрӑлнӑ ушкӑн пулса тӑнӑ,—айалти, вырӑнсенґи Совет аппаратне хресґенсем сырса илнӗ, путартса лартнӑ, т. ыт. те.

Оппоҫитсионерсем „Рабочий вопрос“ йатлӑ листовккӑсем (хутсем) ҫырса салатнӑ. Ҫав хутсенґе мӗн ҫырни меншевиксем мӗн ҫырни-каланинґен нимӗн те уйрӑм мар,—унта рапоґґи класа политсисем пек пусмӑрлакан политтӗк ҫинґен ҫырнӑ, пирӗн хапрӑк-савӑтсенґе каллех вӑрҫӑґґенхи, патша влаҫӗ ґухнехи йӗрке, тесе ҫырнӑ. Ҫакӑн пек сӑмахсене рапоґґи клас тӑшманӗсем анґах, рапоґґи класа парттипе влаҫа хирӗҫ тӑратас шутпа калама пултараҫҫӗ.

Пирӗн ҫитменлӗхсем пур, епӗр вӗсене пытармастпӑр, вӗсен ҫинґен партти те калаҭ. Епӗр ҫитменлӗхсемпе йаланах кӗрешнӗ, малашне те кӗрешетпӗр. Пирӗн аппаратри ҫитменлӗхсем ҫинґен калас пулаҭ, вӗсемпе кӗрешес пулаҭ. Анґах оппоҫитси ҫитменлӗхсем ҫинґен, парттийе вӗсене сирме пулӑшас шутпа каламасҭ, оппоҫитси ҫав ҫитменлӗхсемпе парттипе кӗрешнӗ ґух усӑ курасшӑн.

**Кӗрешӳве оппоçитси Коминттерна та куçарнӑ пулнӑ.**

Кунпах та çитменха. Оппоçитси пӗрлешӳвӗ пирӗн парттипе кӗрешес ӗçе Каминттерна, тата Коминттернра тӑракан парттисене куçарать. Оппоçитси, парттин 14-мӗш сйесӗнђе, парттийе хирӗç тухнипе, Керманири комуниссен парттийӗнђи ђи сулахай текен ушкӑн—Керманири комуниссен парттине салатса йарасшӑн усӑ курать. Унта пирӗн парттин шалти ӗçӗсем çинђен, сотсиалисӑм тӑвасси çинђен тавлашу тапратса йараççӗ. Çав тавлашура Керманири ђи сулахай йенне сулӑнакан йулташсем, пирӗн оппоçитси йуррине, çав кӗвӗпех йурлаççӗ. Раççейри револђутси пролеттариат револђутсийӗ мар, теççӗ, хӗçпӑшалпах Совет влаçне хирӗç тӑма ђӗнеççӗ.

Ђи сулахай йенне сулӑнакансем акӑ тата ӑçта çитсе тӑђӗç: вӑрçӑ мӗн пулсан Керманири комуниссем Совет влаçӗн хутне кӗрсессӗн, 1914-мӗш çулта авкуст уйӑхӗнђи пекех пулать вӑл,—теççӗ вӗсем. Мӗн каласшӑнха вӗсем çак сӑмахсемпе? Акӑ мӗн каласшӑн вӗсем: 1914-мӗш çулта, авкуст уйӑхӗнђе—вӑрçӑ пуçланнӑ ђух мӗнле Керманири сотсиалтемократсем Кермани пуршуаçийӗшӗн тӑрса хӑйсене вараларӗç,—Керманири комуниссем Совет влаçӗшӗн, кӑпиталисла патшалӑхсене хирӗç тӑрсан хаљ те çавах, комуниссем хӑйсене варалани пулать, тесшӗн вӗсем.

**Оппоçитси йађђейккăсем сивленĕ хыççăн килĕшӳ çинђен калаçма тапратаĭ, анђах тепĕр хут парттийе улталӑĭ.**

Парттипе çакăн пек киресĕр майсемпе кĕрешнĕ хыççăн, парттийе иккĕлентерессипе хăратнă хыççăн, парттипе куçа кĕретĕн кĕрешме тухса парăннă хыççăн, оппоçитси пĕрлешĕвĕ килĕшӳ тăвасси çинђен тапратаĭ те, 4-мĕш октапĕрте Тĕп Комиттета парттири кĕрешĕве пĕтересси çинђен сайавлени параĭ. Тĕп Комиттет 14-мĕш сйес парттири пĕрлĕхе сыхлама хушса хăварнине астуса, оппоçитси сайавленине хапăл тусах йышăнђĕ, парттири пĕрлĕхе сыхлама оппоçитсийе условисем лартрĕ.

Анђах оппоçитси пĕрлешĕвĕ сăмахпа кĕрешĕве ђарасси çинђен калаçса, Тĕп Комиттетпа та çавăн çинђенех калаçса, 7-мĕш октапĕрте Ленинкрата пĕр ушкăн акиттаттăрсем йараĭ, акиттаттăрсен ушкăнĕн пуçлăхĕ пулса Çиновйĕв та Ленинкратах кайаĭ. Оппоçитси Ленинкратра хăйне майлă мĕнђул та пулин сасăсем пухма шутланă, анђах оппоçитсийе унта та сивлерĕç, йышăнмарĕç унта та.

**Оппоçитси хăйĕн йăнăш шухăшĕсене пăрахмасĭ.**

Ун хыççăн вара оппоçитси, 16-мĕш нойапĕрте каллех сайавлени параĭ. Вăл сайавленийе пурте пĕлеççĕ, çавăнпа епĕ ун çинђен пĕтĕмпех каласа тăмăп, анђах сайавленин пĕр тĕлĕ çинђен каласах пулаĭ. Оппоçитси пĕрлешĕвĕ фраксиллĕ ĕç ĕçлеме пăрахса, сайавленире çапла çыраĭ: „14-мĕш сйесра, тата вăл иртнĕ хыççăн сйеспа Тĕп Комиттетăн

ытларах пайĕпе епĕр хăшпĕр тĕп ыйтусем пирки килĕшмесĕр икĕ йеннелле уйăрăлса кайрăмăр, епĕр çав ыйтусем çине мĕнле пăхни токкумĕнтсенђен, тата сйесра, Тĕп Комиттет пленăмĕнђе, политпÿрора тухса каланă сăмахсенђен курăнат. Çав шухăшсене епĕр халĕ те пăрахмастпăр".

„Кашнийех пирĕнтен, хăйĕн шухăшĕсемшĕн партти уставĕсенђен, сйессем, Тĕп Комиттет йышăннă решшенисенђен иртмесĕр кĕрешме сăмах парат, партти хăйĕн малашнехи ĕçĕнђе, пирĕн шухăшсенђе мĕн тĕрĕсси пур, çавна йышăнса пырасса кашнийех пирĕнтен шанса тăрат".

Мĕне пĕлтеретха вăл çапла калани? Вăл оппоçитси хăйĕн йăнăш, ленинисăма хирĕç пыракан шухăшĕсене пăрахманнине пĕлтерет. Оппоçитси калани,—партти, ĕçленĕ майĕпе оппоçитси çулĕ çине тăрĕ, партти ленинисăма пăрахса тротскисăмшăн тăрĕ, тени пулат,—тата партти решшенисем йышăнннă ыйтусем пирки оппоçитси малашне те тавлашса пырĕ, тени пулат. Йулашкинђен Çиновйĕв, октăпĕр уйăхĕнђе пулнă Тĕп Комиттетпа Тĕп Контрођ Комиççин пĕрлешÿллĕ пленăмĕнђе çапла калат: „Йулташсем, епĕр Политпÿрора „Хуçайствă лару-тăрăвĕ" тата „Профсойусем" çинђен çырнă теçĕссем пирки çапла каларăмăр: икĕ теçĕсĕнђе „оппоçитси" текенсене хирĕç пыракан 3—4 вырăнсем пур. Çав вырăнсене ресођутсисенђен кăларса пăрахсассăн,—ĕç йенђен пăхсассăн вăл вырăнсене ресођутсийе кĕртме кирлĕ те мар,—вара ресођутсисемшĕн малтанах саслама та пулĕђ-

ђĕ, кайран комиççисенђе сӳтсе йавса тӳрлеткелесен ресољутсисене пĕр саспах йышăнма та пулĕђђĕ“.

Парттипе киресĕр майсемпе кĕрешнĕ, парттийе иккĕлентерессипе хăратнă, Тĕп Комиттета салатса йама хăтланнă хыççăн, октăпĕр уйăхĕнђе пулнă Тĕп Комиттетпа Тĕп Контрољ Комиççи пленăмĕнђе Çиновйĕв оппоçитси пĕрлешĕвĕн йађĕпе, Рыккăвпа Томски теçĕсĕсене кăштах тӳрлетсессĕн оппоçитси пĕрлешĕвĕ вăл ресољутсисемшĕн саслама та хатĕр, тет. Апла пулсассăн мĕншĕнха оппоçитси парттипе кĕрешӳ тапратса йађĕ, парттийе иккĕлентерессипе хăратрĕ, мĕншĕнха оппоçитси парттипе Тĕп Комиттета урăхланса кайнă, терĕ, çул çинђен пăраннă тесе, парттипе Тĕп Комиттета йертсе пыракансене револ̌утси валљи шăтăк ђавакансем, тесе айăплăрĕ?

Оппоçитсийе йертсе пыракансем, парттин 15-мĕш конферентсийĕнђе тухса каланă сăмахĕсенђе хăйсем парттийе хирĕç ĕçлени çинђен, хăйсен шухăшĕсем йăнăшши çинђен пĕр сăмах та каламарĕç. Партти вĕсенђен фраксиллĕ ĕç ĕçлеме пăрахассине анђах мар, оппоçитси пĕрлешĕвĕнђен вĕсем хăйсен йăнăш шухăшĕсене пăрахасса кĕтнĕђђĕ. Оппоçитси пуçлăхĕсем конферентсире, вĕсем хăйсен йăнăш, ленинисăма хирĕç пыракан шухăшĕсемшĕн пĕтĕмпех тăнине кăтартрĕç. Çавăнпа та конферентси, оппоçитси 16-мĕш октăпĕрте, тата Тĕп Комиттетпа Тĕп Контрољ Комиççине панă сайавленисем çине оппоçитси „маневр“ туни çине пăхнă пек пăхрĕ. Ђăнахах та, шутласа пăхарха. Мĕн пулнă пулĕђђĕ партти ĕређĕ 25—40 прођђăн оппоçитси пĕрлешĕвĕ

хыççăн кайнă пулсассăн? Апла пулнă пулсассăн, оппоçитси пĕрлешĕвĕ парттипе кĕрешме ђарăнас çукђĕ, оппоçитси парттийе иккĕлентермесĕр те ђарăнас çукђĕ.

Анђах хаљхи вăхăтра оппоçитси нимĕнсĕрех тăрса йулђĕ те, çарсăр тăрса йулнă йанралсен килĕшӳ тăвасси çинђен калаçма тытăнмалла пулђĕ,—оппоçитси килĕшӳ туса хăйĕн вăйне малашнехи ваљљи перекетлесе усрасшăн. Акă мĕншĕн конферентси оппоçитси сайавленийĕсем çине, оппоçитси „маневр" туни çине пăхнă пек пăхрĕ.

## Оппоçитси „маневр" туса тепĕр хут парттийе улталасшăн.

Йарославски йулташ 15-мĕш конферентсире оппоçитси ĕçĕсемпе сайавленийĕсем çинђен çапла, питĕ тĕрĕс каларĕ: „1925 мĕш çулта, теккапĕр уйăхĕнђе Ленинкратри 22-мĕш конферентсире 14-мĕш сйесра парттипе кĕрешме пĕрлешме ђĕннĕ хыççăн; Çиновйĕвпа килĕшменнисене телеката суйлаттарман хыççăн; парттин 14-мĕш сйесĕнђе уйрăм сотоклатпа тухнă хыççăн; Тротскисемпе, ытти оппоçитсионерсемпе пĕрле Тĕп Комиттетпа кĕрешме пĕрлешӳ тунă хыççăн—есĕр Тĕп Комиттет çук, Сталин фраксийĕ анђах тăрса йулнă, тенĕ; апрел уйăхĕнђе пулнă пленăмра, пирĕн ресољутсишĕн оппоçитси питĕ тарăн килĕшмен пирки саслама пултараймасӳ, тенĕ хыççăн; ийуљ уйăхĕнђе пулнă пленăмра уйрăм теçĕссемпе, уйрăм платформăпа—вăл урăх парттин прокраммин тымарĕ пулманскер пулнă,—тухнă хыççăн, есĕр тунă оппоçитси пĕрлешĕвĕ—нумайлăха,

тата ђӑнђӑнах ӗçлеме, тенӗ хыççӑн; ушкӑнлӑ, крушоклӑ, пиђетлӗ, расхутсем тума ђлен укçиллӗ вӑрттӑн орканисатси, вӑрттӑн канашлусем т. ыт. те тунӑ хыççӑн; Тӗп Комиттетпа Тӗп Контрођ Комиççи урлӑ йађђейккӑсене тавлашу тапратса йама кайнӑ хыççӑн тавлашу тумасӑр урӑх майпа хирӗçӳсене пӗтерсе, килӗшӳ тума май çук тенӗ хыççӑн; парттийе иккӗлентерессипе хӑратса, пайан каçах пухӑнмасан тем те пулма пултарать тенӗ хыççӑн; Пӗтӗм Комуниссен парттине хирӗç тӑракансене вӑй пухма пулӑшнӑ хыççӑн,—есӗр (оппоçитси) пулӑшнӑ вӗсене вӑй пухма, парттипе Тӗп Комиттетпа хытӑ кӗрешме пулӑшнӑ (*вакӑсем*: тӗрӗс),—оппоçитси çаксене пурне те тунӑ хыççӑн кунта килсе, пирӗн килӗшмеллех марри нимех те çук, епӗр теçӗссемшӗн саслама хатӗр тени—вӑл „авантӳрисӑм[1])" пулать (*сасӑсем*: тӗрӗс), вӑл политтӗклӗ „авантӳрисӑм"—урӑх нимӗн те мар (*алӑ çупаççӗ, сасӑсем*: тӗрӗс). (Пӳллеттен, 10-мӗш номӗр, 33-мӗш стр.).

## Оппоçитси пуçлӑхӗсем тротскисӑма ленинисӑмпа витесшӗн—вӗсен ӗç тухмарӗ.

Оппоçитси пуçлӑхӗсем конферентсире пирӗн парттипе тарӑн килӗштерменлӗхсем çук тенисӗр пуççӑр, хӑйсен йӑнӑш тӗп шухӑшӗсене шӑлса лартма хӑтланђӗç. Камӗнӗв йулташ килӗштерменлӗхсене кашни кунхи ӗçри килӗштерменлӗхсем вырӑнне кӑтартма хӑтланђӗ, Тротскипе Çиновйӗв йулташсем тротскисӑма Ленин çырнисенђен татӑксем илсе

---

1) Авантӳрист—пимле ӗçе те тиркемен çын.

шăлса лартма, витме хăтланҍĕç. Анҍах хăтланҍĕç пулсассăн та вĕсен ĕç тухмарĕ, нихăçан та, ниçта та тухас çук, мĕншĕн тесен партти масси ӳссех пыраҭ, ленинисăма тротскисăмран уйăрма пĕлет вăл.

Оппоçитси пуçлăхĕсем, вĕсенҍен пĕри Тротски 15-мĕш конферентсире тухса каланинҍен, Тротски, тĕп ыйту—пирĕн революутсин характĕрĕпе малашнехи кунçулĕ,—пирки, хăйĕн ĕлĕкхи йăнăш тĕп шухăшĕсемшĕнех тăни курăнҍĕ, вăл шухăшсене парттин 13-мĕш сйесĕ сивленĕ,—тата çĕнĕ оппоçитси пĕрлешĕвĕ пĕтĕмпех тротскисăмпа пĕрлешни курăнҍĕ.

Çакăнтан ĕнтĕ паллă, оппоçитси пĕрлешĕвĕ хăйĕн йăнăш шухăшĕсене пăрахман, малашне те пирĕн парттире йăнăш шухăшсем рапоҍҍи клас вăйне шанманнине, т. ыт. те сарма шухăшлаҭ. Конферентси çавăнпа та çапла каласа хăварҍĕ: „парттин çывăх сатаҍĕ—оппоçитси пĕрлешĕвĕн тĕп шухăшĕсем йăнăшшине, шанҍăклă маррине, вĕсем ленинисăмпа килĕшменнине, ленинисăм çумне те çыпăçманнине кăтартса, оппоçитси пĕрлешĕвĕн йăнăш тĕп шухăшĕсемпе кĕрешсе вĕсене çĕнтересси“. (Парттин 15-мĕш конферентсийĕн ресолюутсинҍен).

## Партти масси ӳссех пыраҭ.

Парттире пулса иртнĕ кĕрешĕве хисепе илсе, 15-мĕш конферентси çапла каларĕ: „Партти çак кĕрешӳре хăй питĕ ӳснине кăтартрĕ, нимĕн пăркалanса тăмасăрах оппоçитсин йăнăш тĕп шухăшĕсене сивлерĕ, оппоçитси пĕрлешӳне хăвăрт, пĕтĕмпех çĕнтерсе тăкрĕ, оппоçитсийе пĕтĕм партти

уменђе фраксиллĕ ĕç ĕçлеме пăрахтарђĕ. ПСК(п)П шалти, тата тулти оппортунисла ушкăнсенђен уйă-рăлтарђĕ".

Малалла конферентси тата çапла каларĕ: „Оп-поçитси пĕрлешĕвĕ парттире çилампах тавлашу тапратса йарасшăн, парттин пĕрлĕхне пăсасшăн хăтланнă пирки, партти ĕређĕ Тĕп Комиттет тавра тата хытăрах пĕтĕçрĕ, оппоçитсийе пĕтĕмпех уйăр-са хуђĕ, çапла вара парттире ђăн-ђăн пĕрлĕх пулма май кўрсе хуђĕ.-. Конферентси çапла шутлат: Тĕп Комиттет пĕтĕм партти масси пулăшнипе анђах çакăн пек пысăк ĕç тума пултарђĕ, оппоçитси пло-кĕн киресĕр ĕçĕсемпе кĕрешме партти масси ак-тивнă, тата пĕлсе хутшăнни, партти хăйĕн шалти ђăнђăн темократтине сарса ĕçленине питĕ аван кăтартат.

Парттири пĕрлĕхшĕн кĕрешнĕ ĕçри Тĕп Комит-тет политтĕкне пĕтĕмпех ырласа, конферентси çап-ла решшени йышăнђĕ: 1) Парттири пĕрлĕхе сых-лама ку таранђђен мĕн тунă, ăна ђăнђăнах пур-нăçа кĕртмелле. 2) Пирĕн парттири сотсиал-темок-ратсен йенне сулăнакансемпе хыттăн кĕрешмелле. ăна тума массăна оппоçитси пĕрлешĕвĕн тĕп шу-хăшĕсем йăнăшшине ăнлантармалла, тата оппоçит-син çав йăнăш шухăшĕсем „револђутсиллĕ" сăмах-семпе витĕнсе тăраççĕ пулсассăн та, оппортуни-сăмран нимĕн те уйрăм маррине кăтартмалла. 3) Оппоçитси пĕрлещўне хăйне унăн шухăшĕсем йă-нăш тесе пĕтĕм партти умĕнђе йышăнтарма тăрăш-малла. 4) Пур майсемпе те парттири пĕрлĕхе

сыхласа, фраксиллӗ ӗҫе тапратма, тисӯиплинӑна пӑхӑнмасӑр хӑтланакансене хыттӑн сирсе, татса пымалла.. (15-мӗш конферентсин ресоӯутсинӯен).

**15-мӗш конферентсире ленинисӑм ҫӗнтерӯӗ. Парттин ҫывӑхри сатаӯӗсем.**

Парттири ӗҫсем ҫинӯен, оппоҫитси пӗрлешӗвӗ ҫинӯен, тата парттин ҫывӑхри сатаӯӗсем ҫинӯен 15-мӗш конферентси ҫапла каларӗ, 15-мӗш конферентси пур ресоӯутсисене те пӗр саспах йышӑнӯӗ. Конферентси ленинисӑмшӑн хытӑ тӑӯӗ, нихӑҫан пулман пек пӗр пулса ӗҫлерӗ, оппоҫитсишӗн пӗр сасӑ та пулмарӗ, пӗри те сасӑламасӑр тытӑнса тӑмарӗ.

15-мӗш конферентсире ленинисӑм ҫӗнтермеллех ҫӗнтерӯӗ, ҫавӑнпа та 15-мӗш конферентси партти историне ӯаплӑ странитсӑ пулса кӗрет. Конферентси ҫак иртнӗ ҫулта мӗн тунине анӯах мар, сотсиалисӑм тума тытӑннӑранпа пӗтӗмпе мӗн тунине шута илӯӗ, пӗтӗм ҫитӗнӳсене, ҫитменлӗхсене хисепе илӯӗ, 14-мӗш сйес решенийӗсене тата ҫивӗӯлетсе пирӗн ҫӗршыва промышлӗннӑҫлатма йалхуҫайствине тата ҫӗклентерме мӗн тумаллине кӑтартса хӑварӯӗ. Конферентси ыйтусене пӑхнӑ ӯух сотсиалисӑм тӑвас ӗҫри йӑвӑрлӑхсенӯен те пӑрӑнса иртсе каймарӗ. Вӑл йӑвӑрлӑхсем шалта та пур, тул йенӯе те пур. Шалти йӑвӑрлӑхсем пирӗн хуҫайствӑра вак пуршуаҫиллӗ, тата кӑпиталисӑмла пайӗ ӯылай вӑйлинӯен килеҫҫӗ, вӑл пуринӯен ытла йалта. Шалти йӑвӑрлӑхсем пирӗн ҫӗршыв технӗкпа куӯттурӑ йенӯен

кайа йулнипе çыхăнса тăраççĕ. Тул йенђи йăвăрлăхсем кăпиталисăм вăхăтлăха çирĕпленнипе çыхăнса тăраççĕ.

Халĕ епĕр вăрăма тăсăлакан лăпкă саманара пурнатпăр. Çак лăпкă саманапа пирĕн хамăрăн сотсиалисăмлă хуçайства вăйлатма, пирĕн рапођђи класпа пĕтĕм тĕнђери пролеттариат, тата колонисенђи халăхăн пĕрлешўне вăйлатма усă курмалла. Çак ĕççене тунă ђух пирĕн умра пысăк йăвăрлăхсем пулаççĕ, ăна пытарма йурамасť. Партти вăл йăвăрлăхсене асра тытаť, анђах çавах та парттипе пролеттариатăн çав шалти йăвăрлăхсене çĕнтерме мĕн кирли пурте пур, тата парттипе пролеттариат пирĕн сотсиалисăмлă хуçайствă вăйланса пынă майпа тулти йăвăрлăхсене те çĕнтерсе пыма пĕтĕм тĕнђери пролеттариатпа çыхăну тытассине вăйлатса пыраççĕ.

Парттири шалти ĕççем йенђен—партти пĕтĕçсе тăраť, партти нихăçан пулман пек пĕреллĕ. Ленинисăма тротскисăмпа улăштарма хăтланни пĕтсе ларђĕ, партти апла хăтланакансене çĕнтерђĕ. Оппоçитси пĕрлешĕвĕ 15-мĕш конферентсиђђен парттипе халђђен курман илтмен майсемпе кĕрешсе, парттирен урăх йеннелле сулăнакан, ушкăнсемпе пуринпе те пĕрлешнĕ, партти уставĕнђен иртнĕ—устава пăхăнман, парттийе иккĕлентерессипе хăратнă. 16-мĕш октăпĕрте сайавлени панă хыççăн оппоçитси пĕрлешĕвĕ конферентсипе парттийе ленинисăма хирĕç тăмалли вырăн вырăнне хурса усă курма хăтланни курăнђĕ.

Кунтан ёнтĕ оппоçитси малашне те пирĕн парттипе кĕрешес шухăша пăрахманни курăнать. Партти оппоçитси пĕрлешӳне, партти умĕнђи йăвăрлăхсен хӳтлĕхĕпе парттийе татах турткалама пама пултараймасть. Партти решшени йышăннă ыйтусем тăрăх тавлашу тума ирĕк пама пултараймасть, ун пек вырăнсăр тавлашусем унталла-кунталла пăркаланакансене, сотсиалисăм тăвас ĕçре пирĕн çĕршыв вăйне шанман, ĕненменсене анђах хутшăнтараççĕ.

Парттин, пирĕн оркანისатсин те, оппоçитси пĕрлешӳне хăйĕн шухăшĕсем йăнăшшине, тата партти тытса пыракан лини тĕрĕссине йышăнтарма тăрăшмалла. Тĕп Комиттет тытакан Ленин линийĕ, 9 çул хушши ĕçленинђен епĕр ђăнахах сотсиалисăм тунине, тума пултарассине кăтартрĕ.

Парттин çывăхри сатађĕсем—конферентси йышăннă решшенисене нимĕн тытăнса тăмасăрах пурнăça кĕртесси. Пирĕн парттире малашне нихăш йеннелле те пăркаланакансем ан пулђђăр тесен, партти массин, тата рапођђи класăн куљттурине, политтĕке пĕлнине, партти линипе ленинисăмăн никĕсĕсене тĕрĕс ăнланма пĕлнине хăпартса, малалла йарса пымалла.

Ленинисăм никĕсне тĕрĕс ăнланни, партти пирĕн çĕршыва интустриалисатсилетесси çинђен йышăннă решщенисене тăрăшсах пурнăça кĕртсе пыни, оппоçитсин йăнăш шухăшĕсемпе кĕрешни—пирĕн парттин пĕрлĕхне сыхлĕ, вара пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тăвас ĕç те ăнса пырĕ. (*Алă çупаççĕ*).

4392

Хакӗ 30 пус.